Чăнкă чăвашсем...
Муркаш тăрăхĕнче пурăнаççĕ • 5 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн
30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

36(854) №,
2014, авăн,
6
Хакĕ
ирĕклĕ
16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Пушкăртри тăванăмăрсенчен темĕн те кĕтсе илме пулать... 2 стр.

Интернет пулсан... савăшу та кирлĕ мар. 3 стр.

Ăнăçу çулĕ: пахча çимĕç тулăх ÿстерессĕ, вылькăх нумай усраççĕ. 5 стр.

Çырла пуçтарма – сунчăкпа... 8 стр.

Тĕрĕс арăм. 9 стр.

Мĕнле туй вăйлă шутланать? 10 стр.

Хюрем – пĕччен кашкăр. 11 стр.



4 стр.

# Вăл пĕлĕте çĕрпе çывăхлатнă

**СССР икĕ хут Геройне Андриян Николаев летчик космонавта чăваш халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕр асра тытĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлта хресчен çемйинче çуралнă вăл. Пурăннă пулсан çак кунсенче 85 çул тултаратчĕ.**

Андриян Григорьевич тăван тăрăха аталантарас тĕлĕшпе пысăк тÿпе хывнине палăртмалла. Социаллă нумай объект никĕсне хывма хутшăннă вăл. Çавна май трактор завочĕ, вун-вун шкул, больница, пурăнмалли çурт çĕкленнĕ. Унăн ятне Чăваш АССР Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнекине чи малтан кĕртнĕ. Вăл – Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ. Республикăри хуласемпе районсенчи 30 ытла урам унăн ячĕпе хисепленет.

Çапах тĕлĕнмелле вăхăтра пурăнатпăр эпир. Андриян Николаев пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа 10 çул иртрĕ пулин те экран çинче сăнне курма, унран та ытла, калаçăвне итлеме, пултаратпăр. Унăн нумай аса илĕвĕ упранса юлнă.

Вăл орбитăра карапри креслăран вĕçерĕнсе скафандртан космонавтсенчен пĕрремĕш тухнă. Çавнашкалах Павел Попович украинпа пĕрле ушкăн вĕçевне хутшăннă. Ку та – çав вăхăтри çĕнĕлĕх. Чăваш никамран малтан 19 кун космосра пулни те яланлăхах историе юлнă...

Спортăн хăш тĕсĕпе кăсăкланни çинчен тăтăшах калаçтарнă ăна. Андриян Григорьевич гимнастикăна, çăмăл атлетикăна, акробатикăна юратнă. Çавнашкалах йĕлтĕрпе чупма, конькипе, велосипедпа ярăнма, баскетболла выляма, пăшалтан пеме кăмăлланă вăл. Унсăр пуçне сунара тата пулла çÿреме килĕштернĕ.

Космонавт юратнă апачĕсенчен пĕрне – çĕр улми яшкине – канмалли кунсенче дачăра хăех пĕçернĕ. Купăстапа, суханпа, кишĕрпе пĕрле тĕрлĕ техĕмлĕх янă. Çав вăхăтрах какай шеллеменнипе апат уйрăмах тутлă пиçнине пытарман. Çĕр улми яшкине хир сыснипе пăши какайне те хушнă сунарçă. Çакăнпа уйрăлса тăнă та унăн апачĕ.

Андриян Григорьевич «Вĕç, вĕç, куккук» чăваш халăх юррине юратнине те нумайăшĕ пĕлет. Чунран юрлайманнисене асăрхаттарса та каланă вăл.

Андриян Николаев пĕрре авланнă. Валентина Терешковăпа пĕрле 8 çул пурăннă. Вĕсен куç тулли хĕр Елена пур. Вăл – икĕ ача амăшĕ. Юлашки çулсенче Елена Андрияновна Чăваш Республикине тăтăш килсе çÿрени пире, паллах, савăнтарать. Тĕпренчĕкĕсене те хăйĕнчен хăварманни уйрăмах сăваплă.

*Туссăр çын – туратсăр йывăç.*
Каларăш.

ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 06.09 | +19 | +11 |
| 07.09 | +16 | +10 |
| 08.09 | +17 | +11 |
| 09.09 | +18 | + 9 |
| 10.09 | +19 | +13 |
| 11.09 | +18 | +12 |
| 12.09 | +18 | + 8 |



ХАСТАРРИСЕМ



# Тĕнчипе паларнă спортсменсен тăрăхĕнче

**Атьăр-ха, Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашпа Асламас таврашне çитсе килер. Манпа пĕрле çил ачисемпе ăмăртма хатĕр-и? Кайрăмăр апла... Сăмах май, эпĕ нихăçан та мопедпа ярăнса курман. Ку хутĕнче хăйĕн вăхăтне шеллемесĕр Иван шăпах çак транспортпа пĕр ялтан теприне илсе çитерчĕ.**

**Тĕрĕссипе, йăлтах пăтăрмахран пуçланчĕ. Фотоаппарата манса хăварнине ГАЗеле ларсан тин асăрхарăм. Çапах пулăшма хатĕррисем – кашни утăмрах, вĕсемпе сыхăнма кăна май тупмалла.**

**Мăн Чурашри вăтам шкул вĕрентекенĕпе Александр Сергеевпа тĕл пулма калаçса татăлнăччĕ. Вăлах фотоаппарат тупса пама шантарчĕ.**

### Чемпионсен çулĕпе

Мăн Чураш шкулĕнче юсав ĕçĕсем пуçланнăччĕ. Кĕçех спорт залĕ те çĕнелсе хăтлăланĕ. "Уннчен физкультура урокĕ стадионта иртĕ", – хăйне сырса илнĕ ачасене ăнлантарать Александр Дмитриевич. Унта сывлăха çирĕплетме пĕтĕм услови пур. Выляма та вырăн çителĕклех.

Физкультура вĕрентекенĕ хăйĕн ĕçне чунран парăнни тӳрех паллă. Ачасен кашни çитĕнĕвĕ хавхалантарать ăна. Юсав вăхăтĕнче кубокпа медальсене кăтартайманшăн пăшăрханса та илчĕ Александр Дмитриевич. Юрĕ, тепре тĕл пулмашкăн сăлтав пултăр. Журналистсем çул çӳреме юратаççĕ.

Çавнашкалах çăмăл атлетика тата кире спорчĕ енĕпе тренерта тăрăшать вăл. Унăн вĕренекенĕсем районпа республика шайĕнче кăна мар, Раççейре те малти вырăнсене йышăнаççĕ. Александр Иванов, Светлана Кочкова, Игорь Кукушкин, Михаил Исак уйрăмах маттур. Сăмах май, çак тăрăхра тĕнчипе паларнă спортсмен сахал мар. Валерий Кочков, Вениамин Григорьев, Георгий Никифоров, Наталия Иванова чемпионсене ялйыш асра тытать. Çакăнта вĕсен ячĕпе ăмăртусем йĕркелеççĕ.

20 çул ытла ачасемпе ĕçлет Александр Сергеев. Мăн Чурашра кăна мар, Кăташра та, Палтайра та лайăх пĕлеççĕ ăна. Унта та ырă ятлă вĕрентекен.

### Хĕрсем хулара пурăнасшăн

Çемье çавăрма вара вăхăт пулман Александр Дмитриевичăн. Вăл – Сергеевсен 6 ывăлĕнчен чи асли. Малтан кĕçĕннисене ура çине тăратма пулăшнă паллах. Эх, вăхăт мĕншĕн пĕр шелсĕр малалла васкать-ши?

"Ырă шухăшпах килнĕ иккен пирĕн тăрăха..." – çемье телейне тупасси пирки сăмах пуçарсан калаçăва хутшăнчĕç Александр Сергеевăн тăванĕсем.

Физкультура вĕрентекенĕн чун киленĕçĕ çинчен ытларах пĕлес килчĕ. Кĕнеке вулама юратать вăл. Истори романĕсем ытларах кăсăклантараççĕ ăна. Килти хуçалăхра ĕçлесе ывăнсан вăлтапа юхан шыв хĕррине кайса ларать Александр Дмитриевич.

Пахчари, хирти ĕçсене техника çăмăллатни çинчен вăрах калаçрăмăр унпа. Чăнах, хĕрсем мĕншĕн хулана тухса тараççĕ-ши?

"Чипер юлăр, Мăн Чураш тăрăхĕнче тĕпленнисем..." – мопед тапрансан сыв пуллашрăм ял-йышпа. Çил манăн сăмахсене таçта çити вĕçтерчĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Çуралсанах куç хывнă та...



**Çĕрпӳри хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи, депутат, халăха социаллă пулăшу паракан центрăн пуçлăхĕ Наталья Михайловна çут тĕнчене хĕлле килнĕ. Ача çуратмалли çуртран илсе тухнăскерне çийĕнчех киле илсе çитереймен. Çула юр хӳсе лартнăран ăшăнмашкăн Тĕнсĕрти Ильинсем патне илсе кĕнĕ ăна. "Хĕр ачана илсе юлăпăр..." – тĕпренчĕк йĕри-тавра çавраннă иккĕри Валера. Вăхăт иртсен шăпах çав хĕре куç хывса качча илнĕ вăл. Ача шăпи çуралсанах çырăннине епле ĕненмĕн?**

**"Ачасем ашшĕ ӳсĕр çӳренине курман", – тет Наталья Михайловна. Пĕр-пĕринпе канашласа ĕçе пуçăнаççĕ вĕсем. "Атя, пыл хурчĕсем тытма пуçлăпăр", – пĕрре сăмах пуçарнă Валерий Петрович. Малтан хурт-хăмăр сăхсан ӳт хĕрелсе шыçни пирки маннă тейĕн вăл. Ильинсем хĕлĕпе энциклопеди вуланă та пахчара шăкăрин вĕлле лартса тухнă. Халĕ пыл çисе киленеççĕ.**

### Ĕçке хирĕç

"Ирхине урамри çынсен калаçăвĕ вăратрĕ. "Фанфурик" туянасшăн хайхисем. Ăçта мĕн хакпа сутнине сӳтсе яваççĕ", – аса илет Наталья Ильина. Ку хыпар та ĕçре пулăшнă ăна. Çĕрпӳсем ĕçкĕпе те вирлĕ кĕрешеççĕ. Рейдсем йĕркелессине йăлана кĕртнĕ. "Лавкка, аптека сутуçисем те пирĕнпе пĕр шухăшлă. "Фанфурик" сутмалла мар тăк – илсе хурăпăр", – теççĕ", – ăнлантарать хĕрарăм. Чăн та, халăх кар тăрсан йĕркесĕрлĕхе çĕнтерме çăмăлрах.

Ĕçекен ашшĕ-амăшне сиплене ăсатнин витĕмĕ те пурах. Çак йышăн пĕр пайĕ сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнма пуçлани те – ыттисемшĕн тĕслĕх.

Психологпа, пачăшкăпа канашлани çемьене сыхласа хăварма май пани тавра та калаçу пуçарчĕ Наталья Михайловна. Юратса пĕрлешнĕскерсем пĕр-пĕрне каçарма, çĕнĕ пурнăç пуçлама вăй çитерни нимрен хаклă.

### Тăванĕсене мар тăк, патшалăха кирлĕ

Ĕмĕр тăршшĕпех кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ çын та ватăлсан никама кирлĕ мар пулса тухать. Унашкаллисене социаллă пулăшу паракан центр ĕçченĕсем Патăрьелти вăхăтлăх вырнаçмалли пункта ăсатаççĕ.

"Ункăçумĕнчи пĕр хĕрарăмăн куçĕ пӳрленме пуçланăччĕ. Халсăрлансах çитнĕччĕ вăл. Ватта больницăна хутăмăр, унăн куçне операци турĕç. Халĕ хĕрарăм хăйне лайăх туять. Тивĕçлĕ канури çын Патăрьелти пункта вырнаçтарнăшăн çав тери кăмăллă. Кашни тĕл пулмассерен пире валли ăшă сăмах тупать", – тăсăлать калаçу.

### Тивĕçлĕ канурисем вĕренеççĕ

Халăха социаллă пулăшу паракан центрта аслă ӳсĕмрисен университетне уçни те – çĕнĕлĕх. Унта пĕлӳ илекенсем çулла каникулта канаççĕ. Сăмах май, аслă шкулта 4 факультет ĕçлет. Çакăнта ватăсене çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама пулăшаççĕ, юристпа, сывлăх сыхлавçисемпе тĕл пулусем йĕркелеççĕ, фитотерапи хăйне евĕрлĕхĕпе паллаштараççĕ, тутлă апат пĕçерме хăнăхтараççĕ. Унсăр пуçне вĕренекенсем зарядкăна тухаççĕ, экскурсие каяççĕ.

Килти хăтлăх, çемьери килĕшӳ кирек кама та вăй парса тăрать. Наталья Михайловнăн ăшă кăмăлĕ, çаврăнăçулăхĕ, тараватлăхĕ вара пурне те çунатлантарать.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ÇЫРĂНТАРУ

# Пушкăртра та юратса вулаççĕ



Вера Артемьева почтальон ытти мĕн пур чăваш хĕрарăмĕ пекех ирхи шуçăмпа вăранать. Ĕнине суса кĕтĕве хăваланă хыççăн сумкине йăтса Треппел почта уйрăмне васкать. Кашни кунах çапла. Таврари виçĕ яла уйăрса панă ăна. Çулĕ вăрăм, утса ывăнмалăх пур. Эрнере виçĕ кун хаçат валеçет вăл. Унсăр пуçне ялти ватăсене пăхать. Амăшĕ Нина аппа ĕмĕр-ĕмĕр почтальонра тăрăшнăран çак ĕçе лайăх пĕлет Вера: йĕпесапине, çил-тăманне пăхмасăр аппăшĕ-йăмăкĕпе пĕрле мĕн пĕчĕкрен хаçат валеçме тивнĕ унăн.

Пушă вăхăтра хăвăртрах ялти культура çуртне васкать Вера Михайловна. Уявсене хутшăнать, спектакльсенче вылять. "Сан артист кăна пулмалла", – тесе пĕрре мар калană ăна.

Стерлитамакри физкультура техникумĕнчен вĕренсе тухнăскер хĕлле йĕлтĕрпе чупма юратать. Спортпа туслă çемьене районта та аван пĕлеççĕ. Республикăра иртекен ăмăртусенче те чылай çĕнтернĕ вăл. Ултăмĕш класра вĕренекен хĕрĕ Анжела ытларах теннисла выляма кăмăллать.

Треппел почта уйрăмĕнче халĕччен пĕртен пĕр çын çеç – чăваш чĕлхи учителĕ Елизавета Миронова – çырăнса илнине кура Верăпа иксĕмĕр ял çыннисене "Чăваш хĕрарăмĕпе" туслаштарма шухăшларăмăр. Каç енне çеç таврантăмăр киле. Пушкăрт чăвашĕсен йăли çапла. Килнĕ çынна сĕтел хушшине лартмасăр, чейпе хăналамасăр кăларса ямаççĕ. Чылай килте юратсах çырăнчĕç пирĕн кăларăма. Авăн уйăхĕнчен тытăнса Треппел почта уйрăмне 26 экземпляр "Чăваш хĕрарăмĕ" килсе тăма пуçлĕ. Çак тăрăхри Кăтаймас, Пишкайăнпа Çĕньял ялĕсем те малашне пирĕн хаçата юратса вулĕç.

Туссен йышĕ тата ӳсмеллечĕ те, нумайăшĕн алăкĕ çинче çăра çаканса тăратчĕ. Халăх çу кунĕсенче килте лармасть çав.

**Елена АТАМАНОВА.**

Пушкăртстан.

**РЕДАКЦИРЕН. Çапах та 2015 çулăн пĕрремĕш çуррине – кăрлач уйăхĕнчен тытăнса – ку тăрăхра пирĕн йыш татах та ӳсессе шанас килет. Тепĕр тесен, Пушкăрт чăвашĕсенчен темĕн те кĕтсе илме пулать. Тытĕç те Треппелсем, ялĕ-ялĕпе хаçат çырăнĕç – пĕр çемье те айккинче тăрса юлмĕ ку ĕçрен. Кăтаймаспа Пишкайнă тата Çĕньял тăрăхне вара эпир редакципех çитсе курма та хирĕç мар...**

ĔÇ ÇЫННИ



СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Интернет пулсан... савăшу кирлĕ мар

**Алина ИЗМАН**

**Интернет пирки вунă çул каялла çеç-ха ватăсем мар, çамрăксем те сахал пĕлеттĕмĕр. Унпа еплерех усă курмаллине хăнăхса çитеймессĕнех туйăнатчĕ. Пурнăç вара малаллах шăвать, общество та прогресс утăмсене аванах хăнăхнине куратпăр. Халĕ акă кинемейсемпе мучисем те компьютер умне ларчĕç, кĕсье телефонĕпе çыхăну йĕркелесси те вĕсемшĕн кăткăслăх çуратмасть. Пепкисем калаçма вĕреничченех компьютер çутса килĕшекен мультфильм яма пĕлнишĕн мухтанать ашшĕ-амăшĕ. Шкул ачисем пирки калама та кирлĕ мар: планшет, нетбук урокра та вĕсен аллинчен каймасть.**

**Интернета тиркекен те, ырлакан та пур. Çапах та хапăлласа йышăнакансен шучĕ ытларах. Ара, мĕн кăна çук унта! Çĕр-шыври хыпарсем, чикĕ леш енче епле пурăнни, "çăлтăрсенчен" кам кама юратни-пăрахни... Вĕренекенсемпе вĕрентекенсемшĕн те шĕкĕлчемелли тем чухлех. Тус-тантăшпа, пĕлĕш-тăванпа та çăмăллăнах хутшăнма пулать мар-и? Алла калем тытса çыру çырас вырăнне Интернетпа хăвăртах çыхăнма меллĕ. Ют хулари тус-тăван патне тăтăшах çӳреме май килмест. Халĕ скайппа пĕр-пĕрин çине пăхса калаçма та пулать. Çакна вара никам та "япăх пулăм" тесе хакламĕ.**

**Çапах та начарри те куç умĕнче. Тĕнчене ярса илнĕ тетел эрешмен пек картине туртать те туртать. Ачасен урамра ытларах çӳреме тăрăшмалла тетпĕр те, халĕ йăлт улăшăнчĕ. Компьютер умне "çыпăççах" ларнăскерсене лапталла выляма та, тăвайккинчен çунашкапа ярăнма та, йĕлтĕрпе ăмăртмалла чупма та хăваласа яраймăн. Эпир, сăмахран, çакăн пек выляса-кулса çитĕннĕ. Техника вара куçа та, пуçа та ывăнтарать, шăм-шак та çамрăклах хытать.**

**Ачасем кăна мар, аслисем те сереперен уйрăлаймаççĕ. NewsEffector аналитика компанийĕ тĕпчевĕ тăрăх – ыйтăма хутшăннă Раççей çыннисен 53% /18-55 çулсенчисем/ хăйсен пурнăçне Интернетсăр курманнине палăртнă. Тетел çыхăнăвĕ вăхăтлăх татăлнăшăн 33% хăйсене лăпкă туйманнине пытарман. Çулсем иртнĕ вăхăта ытларах та ытларах компьютер умĕнче ларнине 61% пĕлтернĕ. "Тетеле кĕрессишĕн мĕн пама хатĕр?" – ыйтăва респондентсем хуравланă. Арçынсен 68% тата хĕрарăмсен 42% вĕри шывсăр ларма хирĕç мар, арçынсен 45% тата хĕрарăмсен 56% диетăна пăхăнма килĕшнĕ, арçынсен 12% тата хĕрарăмсен 9% Интернета савăшупа, çемьери хутшăнупа ылмаштарма хатĕр.**

**Раççейри 8-10 çулсенчи ачасен 80% Интернетпа усă курать. Телефон, компьютер – вĕсен алă айĕнчех. "Рамблер Топ 100" рейтингĕ палăртнă тăрăх, ытларахăшĕ вăйă сайтĕнче ларать. Çавăн пекех хатĕр сочиненисен, килти ĕççен, рефератсен ресурсĕсене кĕрсе тухаççĕ. Чăнах та, вĕренӳре питĕ пулăшакан хатĕр вăл. Анчах хăрушлăх та кӳме пултарнине манмалла мар. Ачасен сывлăхĕпе аталанăвне сиен кӳрекен информацирен хăтарассине патшалăх та хăйĕн çине илчĕ, тивĕçлĕ саккун йышăнчĕ, çул çитменнисене кĕме юраман сайтсен пĕрлехи реестрĕ те хута кайрĕ. Интернет-провайдерсем хăйсем те ачасене хăрушлăхран сирес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çапах та ашшĕ-амăшĕ кăна усаллинчен хăтарĕ, тĕпренчĕкĕ мĕнле сайта кĕрсе тухнине тĕрĕслемеллех вĕсен. Кун пирки вĕçĕмех асăрхаттараççĕ-ха, анчах та кăмăла пăсакан тĕслĕхсем пĕрех тĕл пулаççĕ. Чăваш Енри Роскомнадзор управленине пулăшу ыйтса 11 çулти хĕр ача амăшĕ шăнкăравланă, пепкин социаллă страницине усал шухăшлă çынсем "çĕмĕрсе кĕрсе" порно сăн ӳкерчĕксемпе видео вырнаçтарнине пĕлтернĕ. Тепĕр хĕрарăм ача-пăча конкурсĕн ссылки тăрăх иккĕленӳллĕ сайта пырса тухнă, порно содержаниллĕскерте хăйĕн ачин ятне курсан аптăрасах ӳкнĕ...**

**Кăçалхи çур çулта пирĕн республикăра порнофайл сарăлнă 7 тĕслĕх тупса палăртнă, вĕсенчен 5-шĕнче ачасем хутшăнни паллă. Çул çитмен çамрăксен хушшинче Интернетпа усă курса тăвакан преступленисен йышĕ ӳсет. Вĕсем экстремистла материал сарнипе те, наркотикăн саккунлă мар çаврăнăшĕпе те çыхăннă. Çамрăксем тетелте хăйсене ирĕклĕ туяççĕ, йăлтах алăран каясса шанаççĕ. Хăйсем мĕн тери пысăк хăрушлăха çакланасса чухламаççĕ те.**

**Çĕнĕлĕхсене алла илсе компьютерсăр "кун кунлайман" чире ерес марччĕ, ăс-тăна сиен кӳрекен сайтсемпе айкашас марччĕ кăна. Интернет урлă ĕç тума та меллĕ-çке – çакă пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, ку тĕлĕшпе патшалăх пулăшăвĕ паракан пĕрлехи портала çырăнмалла кăна. Хальлĕхе унта Чăваш Енри халăхăн 6,2% регистрациленнĕ. Вĕсен федераци тата регион шайĕнчи пулăшусемпе /çĕр-шыври – 42, муниципалитетри – 27/ усă курма ирĕк пур. Килтен тухмасăрах мăшăрсене çырăнтарма, ачашăн уйăхсерен тивекен пособие илмешкĕн, социаллă килĕшӳ мелĕпе пурăнмалли çурт-йĕр черетне тăма тата ытти тĕлĕшпе те ыйту çырма пулать. Пĕрлехи портала кĕресси те ансатланнă, унта харпăр хăй кабинетне уçмашкăн кĕсье телефонĕн номерĕ е электрон почта адресĕ кăна кирлĕ. Электрон хутшăну çынна черет тăрса хăшкăласран, пӳлĕмрен пӳлĕме çӳресрен хăтарать.**

СПОРТ

# Форума хатĕрленеççĕ

Юпа уйăхĕнче пирĕн республикăра Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум иртесси пирки хаçатра çырнăччĕ.

Ытлари кун Правительство çуртĕнче форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантарас тĕлĕшпе ĕçлекен Канашĕн ларăвне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Унта Чăваш Ен пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ.

ЧР транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Владимир Филиппов каланă тăрăх, юпа уйăхĕн 10-11-мĕшĕсенче Мускавран Шупашкара хушма рейссем уçĕç. Тĕп хулана чылай хăна килмелле. Халăха турттарма лайăх, хăтлă автобуссем уйăрĕç. Кашни транспорт çинче форум логотипĕ пулĕ.

Шупашкар хулин пуçлăхĕ Леонид Черкесов вара форума хутшăнакансем валли ятарлă паллăллă калпаксемпе шарфсем çĕленине пĕлтерчĕ. Волонтерсем валли галстуксем, çумăрта тăхăнмалли пĕркенчĕксем, сумкăсем хатĕр.

Форума хатĕрленсе Шупашкарти кашни хăна çуртĕнчех сувенирсем валли ятарлă вырăн уйăрнă. Унтах чăваш наци çи-пуçĕпе те паллашма май пур. Волонтерсен тумтирне Мускав дизайнерĕсем палăртнă. Ăна тĕп хулари çĕвĕ фабрикисем хатĕрлеççĕ. Вĕсене кĕçех спорт лавккисенче, хăна çурчĕсенче сутма пуçлĕç.

Спорт форумĕ вăхăтĕнче хулара иртекен мероприятисене пурĕ 45000 ача хутшăнмалла. Вĕсене пурне те сувенирпа хавхалантарĕç.

ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов пĕлтернĕ тăрăх – форума йĕркелесе ирттерме 495 волонтер пулăшĕ. Вĕсем – Шупашкарти аслă шкулсемпе колледжсенче пĕлӳ илекенсем. Волонтерсемпе ятарлă занятисем ирттернĕ, графикпа, ĕç йĕркипе паллаштарнă.

**Елена АТАМАНОВА.**

ТĔЛ ПУЛУ

# Раççей министрĕ – Чăваш Енре



Çĕр-шывра апат-çимĕç хăрушсăрлăхне йĕркелесси аграри политикине тĕрĕс тытса пынинчен нумай килет. Регионсенче ку енĕпе ларутăру еплерех? АПК аталанăвĕн хăш отраслĕнче йывăрлăхсем пур? Министерство вĕсене еплерех витĕм-пулăшу кӳме пултарать? Çак ыйтусене уçăмлатас тĕллевпе РФ Ял хуçалăх министерствин ĕçченĕсем Николай Федоров министр ертсе пынипе субьектсенче пулаççĕ. Ытлари кун, авăнăн 2-мĕшĕнче, Чăваш Енре те ĕçлĕ тĕл пулусем иртрĕç.

РФ ял хуçалăх министрĕ Николай Федоров республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен предприятисене çитсе курчĕ. "Юрма" агрохолдингăн Патăрьел районĕнче вырнаçнă сысна комплексĕнче пулчĕ. Агрохолдинг 8 çуллăха 3 млрд та 100 млн тенкĕлĕх кредит илсе производствăна малалла аталантарасшăн. Çапла майпа çулталăкра 55 пин тонна сысна какайĕ туса илес тĕллевлĕ. Владимир Ермолаев гендиректор кăçал тыр-пул лайăх çитĕннине, выльăх апачĕ енчен нимĕнле йывăрлăх та çуккине пĕлтерчĕ.

Николай Васильевич Тăвай районĕнчи "Акконд-агро" фирмăна та çитсе курчĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи ĕççемпе паллашрĕ.

Тăвай районĕн администраци çуртĕнче Николай Федоров ертсе пынипе "Чăваш Республикинче выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарасси çинчен" темăпа анлă канашлу иртрĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, сĕт, аш-какай, çăмарта туса илекен предприятисен ертӳçисем хутшăнчĕç.

**Елена ГЛУХОВА.**

ПУЛĂМ

# Хăюлăх манран нихăçан та ан кайтăр

## Çапла çырса хăварнă Аркадий Айдак

Вăл ӳссе пыракан ăрăва тӳрĕ çул çине тăратассишĕн, çамрăксен чун-чĕрине пуянлатассишĕн тăрăшнă. Йĕркеллĕ пурăнма, ĕçлеме кашни çынна чун вăйхăвачĕ кирлине палăртнă.

Юн кун Етĕрне районĕнчи Тури Ачак ялĕнче Раççей Федерацийĕн культурăн тата ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинне, "Ленинская искра" колхоза нумай çул ертсе пынă Аркадий Айдака асăнса палăк уçрĕç.

Мероприятие Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Етĕрне район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Кузьмин, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Малов, "Ленинская искра" хуçалăх ертӳçи Валерий Герасимов, ял çыннисемпе хăнасем хутшăнчĕç.

– Аркадий Айдак – хамăн вĕрентекенсенчен пĕри. Унăн "урокĕ" чун-чĕрене яланлăхах кĕрсе вырнаçнă. Вăл маншăн çул кăтартса пыракан, йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшакан тĕслĕхчĕ. Аркадий Павлович ял халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн ĕçленĕ, вăл пуçарнипе производствăпа социаллă пурнăç, культура обьекчĕ чылай çĕкленĕ. Вĕсемпе паян та усă кураççĕ. Вăл ял тăрăхĕнче вун-вун гектар йывăç-тĕм ларттарнă, çырмаçатрана пĕвелеттернĕ. Чăвашăн ырă ятне çӳле çĕкленĕ, – тесе палăртрĕ Михаил Игнатьев.

Аркадий Айдак ĕçĕнчи тĕп никĕс – тавралăха сыхласси, ăна илем кӳресси. Вăл пуçарнипе ял хуçалăхĕнче çут çанталăк комплексĕсемпе обьекчĕсем, чĕр чунсемпе ӳсен-тăрана сыхламалли вырăнсем хута янă, вĕсем йăлтах ăслăлăх çинче никĕсленнĕ.

Аркадий Айдакăн мăшăрĕ Людмила Андреевна палăк лартма пулăшакансене тав турĕ. "Палăк çине пăхатăп та – ман çине



Аркадий Павлович тинкерет, мана тем каласшăн пекех туйăнать. Ун çинчен аса илмелли нумай. Çамрăксене пурнăçра Айдак пекех хăюллă пулма сунатăп", – терĕ вăл.

Палăка республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата вырăнти шкул ачисен пĕр ушкăнĕ уçрĕ. Бюст проектне ЧР тава тивĕçлĕ ӳнерçи Владислав Немцев хатĕрленĕ. Ку ĕçе Етĕрне район çыннисенчен, спонсорсенчен пухнă укçапа пурнăçланă.

**Елена МИХАЙЛОВА.**



АС ТĂВĂМ

# Вăл пĕлĕте çĕрпе çывăхлатнă

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Шуршăлти Андриян Николаев летчик космонавтăн Мемориал комплексĕ чăваш ятне çăлтăрсем патне çитерни ентĕшĕн кун-çулĕпе паллаштарать. Пĕчĕккисенчен пуçласа аслă ăру таранччен çак тăрăха çитсе килесшĕн. Экскурси хыççăн ачасен уйрăмах калаçа кăтартмалли нумай. Çĕрпе пĕлĕте çывăхлатакан экспонатсем вĕсен асĕнче юлни иккĕлентермест.

Аса илтеретĕп, халĕ Мемориал комплексне космонавтика музейĕ, «Ракета» стела, Николаевсен музей-çуртĕ, Андриян Николаевăн бронза бюсчĕ, шыв сикки, часавай, парк кĕрет. Музейăн 5 залĕ çак пайсене пĕрлештерет: «А.Г.Николаевăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ», «Космос – вĕçĕ-хĕррисĕр çул», «Сывлăх сунатăп, çĕр», «Астрономи класĕ», «Циолковский шухăшне пурнăçа кĕртни». Экспонатсене 1972 çулта пуçтарма пуçланă. Ун чухне шкул музейне Андриян Григорьевичăн амăшĕ Анна Алексеевна ывăлĕн япалисене пырса панă. Кайран космонавт хăй те музее пуянлатма нумай пулăшнă. Малтанхи вăхăтрах çулсерен Шуршăла 50-шар пин хăна пырса çӳренĕ. Унтанпа экскурсие пынисен йышĕ 2 миллионран та иртнĕ.

* * *

А.Г.Николаев космонавт летчикăн Шуршăлти мемориал комплексĕнче мухтавлă Андриянăмăрăн çуралнă кунĕ яланах хĕвеллĕ, сутă килнине пурте асăрханă-тăр. Урăхла пулма та пултараймасть пек, ентешĕмĕр хăй те питĕ уçă, ăш пиллĕ чунлă-кăмăллăччĕ. Совет Союзĕн виççĕмĕш космонавчĕн 85 çулхи юбилейне сумлă палăртма çав кун ăстан кăна килсе çитмерĕç-ши çĕр-шывĕпех палăрнă чăваш ялне: Мускавран – тĕнче уçлăхĕн паттăрĕсем, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсем Петр Климук генерал-полковник, Алексей Леонов генерал-майор, Совет Союзĕн Геройĕ Анатолий Соловьев, Раççей Геройĕсем Олег Новицкий, Юрий Батурин, "Восток" космос карапĕн никĕслевçи, космос карапĕсене вĕçеве хатĕрлекен ăслăлăхпа техника центрĕн Виктор Благов, "Новости космонавтики" журнал редакторĕ Игорь Маринин, тĕп хуламăрти чăвашсен наци культурин автономийĕн вицепрезиденчĕ Анатолий Григорьев тата Андриян Григорьевичпа Валентина Владимировна хĕрĕ Елена Андрияновна Терешкова мăшăрĕпе, ывăлĕпе, тăванĕсемпе. Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен делегацисен йышĕнче вун-вун хăна пулчĕ. Вĕсен йышĕнче хамăр республика ертӳлĕхĕ, тĕрлĕ шайри депутатсем, шкулта вĕренекенсем, çамрăк космонавтсен отрячĕсен хастарĕсем...

Савăнăçлă митингра Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăй те ачаранах Андриян Григорьевичран тĕслĕх илнине, унпа мăнаçланнине палăртрĕ, унăн сăнарĕ, ячĕ яланах халăх асĕнче упраннине çирĕплетрĕ.

Михаил Васильевич пурне те мухтавлă ентешĕмĕр пек пулма, унран тĕслĕх илме, тăван республикăмăршăн тăрăшса ĕçлеме-пурăнма ырă сунчĕ. Елена Андрияновна калани те пил евĕр илтĕнчĕ: "Атте хăйĕн тăван кĕтесне питĕ юрататчĕ, уншăн çав тери тунсăхлатчĕ, тăван чĕлхене питĕ хисеплетчĕ. Чĕлхене юратăр, хисеплĕр. Вăл пурнăç тымарĕ. Çуралнă кĕтесе яланах асра тытăр, унăн хăвачĕшĕн тăрăшăр. Тĕнчери чи хаклă çынсене эпĕ те атте чĕлхипе хисеплеме пĕлетĕп, вĕсем – аттепе анне!

Шупашкарта тата Шуршăлта, аттене çуратса ӳстернĕ çĕр çинче татах пулма тӳр килнишĕн эпĕ питĕ хĕпĕртетĕп. Ырă туйăмлă çынсен ытамне лекме, хаваслă сăнĕсене курма çав тери кăмăллă. Тĕлĕнмелле ырă туйăмсем çупăрлаççĕ мана, ăна палăртма сăмахăм çитмест. Пурне те ыррине кăна сунатăп..."

Олег Новицкий, Алексей Леонов, Петр Климук космос паттăрĕсем, Ю.Гагарин ячĕллĕ космонавтсене хатĕрлекен центрăн ертӳçин пулăшуçи Виктор Плакида хăйсен ĕçтешĕ тата пирĕн ентешĕмĕр, çавăнпа пĕрлех чăваш халăхĕ пирки нумай ăшă сăмах каларĕç. "Кăмăлне, тараватлăхне, тĕплĕлĕхне, ĕçченлĕхне уйрăммăн палăртмасăр хăварсан пире намăс та, – терĕç вĕсем пĕр шухăшлăн. – Çакăн пек халăх кăна çакăн пек паттăр ывăл çуратма пултарнă..."

А.Николаевпа В.Терешковăн хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата мăнукĕ Андрей, вĕсемпе пĕрле килнĕ хăнасем чăваш халăхĕ хăйсене мĕнле хисеплесе юратнине кашни утăмра туйса тăчĕç. Таса Адрианпа Наталья часавайне кĕрсе ашшĕн вил тăпри çине чечек кăшăлĕсем хучĕç, унăн ячĕпе çурта çутрĕç.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн çуралнă кунне халалласа К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче уяв иртрĕ.

Уяв çинчен тĕплĕнрех «Хыпар» хаçатăн авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнчи номерĕнче вуласа пĕлме пулать.

**Мария РОМАНСКАЯ,**
**Юрий СТЕПАНОВ,**
**Валентина БАГАДЕРОВА.**








Олег МАЛЬЦЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

ШУХĂШ

# Кунашкал вырăна чун туртмасть

Кăçал çулла хăнана кайма тухрăм. Ялтан савнă шурă Шупашкара çитсен хăнăхнă йăлапа кучченеç илмешкĕн юратнă гастроном еннелле утрăм. Пыратăп çапла унталла-кунталла пăхса, хитре хулапа киленсе...

Хĕрĕх çул каялла, Шупашкарта пурăннă чухне, «Восток-3» гастрономра апат-çимĕç туянаттăм. Юхан шыв портĕнче ĕçлеттĕм те çула май чун çавăнта туртатчĕ. Хăтлăччĕ унта. Сентресене тĕрлĕ çимĕçпе тултарнăччĕ. Виççĕмĕш космонавта халалласа уçнă гастрономпа мăнаçланаттăм. Мĕнлерех чипер, кăмăллă сутуçăсем ĕçлетчĕç тата.

...Хайхи палăртнă вырăна çитсе те тăтăм. Анчах «Восток-3» гастроном вырăнне «Аптека» тесе çырса хунă. Çук-ха, ĕненес килмерĕ çакна. Куç çаплипех апат-çимĕç лавккине шырарĕ. Атăл хĕрринелле те çул тытрăм. Утсанутсан каялла çаврăнтăм, асăрхамасăр иртнĕн туйăнчĕ.

Гастроном пулнă çурт çывăхнелле пытăм. Унччен те пулмарĕ, пĕр кĕтесре пĕчĕк сас паллисемпе «Восток-3» çырнине курах кайрăм. Чун мĕнешкел савăнчĕ. Çав вăхăтрах пĕчĕк алăкпа кĕрсен кăмăл хуçăлчĕ – ялти лавкка те унран пысăкрах.

«Восток-3» гастроном Шупашкарăн чысĕ, чапĕ, мухтавĕ пулнă. Хăварах шухăшлăр-ха, çĕнĕ ăру валли асăнмалăх мĕн юлĕ? Çапах хамăрăн ентеше, Совет Союзĕн икĕ хут Геройне Андриян Николаева манăçа кăларас марччĕ.

**НИКОЛАЙ.**
Канаш районĕ.

# "Ентешпе мухтанатăп!"

Красноармейски районĕнчи Тусай ялĕнчи Юрий Николаев космонавтпа пĕрешкел хушаматлă пулни пурнăçне мĕнле витĕм кӳни çинчен каласа кăтартмашкăн ятарласа редакцие килчĕ.

16 çултах ялти 2 çамрăкпа пĕрле Казахстана ял хуçалăх училищине вĕренме тухса кайнă вăл. Практика вăхăтĕнче кунне-çĕрне пĕлмесĕр ака тунă. Ун чухне вырăссемпе, чеченсемпе, нимĕçсемпе туслашнă.

Повестка илсен ялĕпех хĕсмете ăсатнă ăна. Юрий Николаев Германири çар чăçне лекнĕ. Шăпах çав вăхăтра чăваш каччи Андриян Николаев космоса вĕçни пирки тĕнчипех каласнă. "Эсĕ те çав тăрăхран, сан тăван мар-и вăл?" – тĕпчеме пуçланă çар çыннисем. Чăвашра Николаев хушаматлă çын сахал-и? Иккĕшĕ пĕр йăхран мар. Апла пулин те савăнăçлă митингра трибуна умне кăларса сăмах панă ăна. Мĕнешкел пысăк чыс пулнă çакă уншăн. "Хамăн ентешпе мухтанатăп!" – тенĕ Николаев ефрейтор. Унтан салтаксем 3 хутчен "ура" кăшкăрнă, оркестр вылама пуçланă. Кун пирки вырăнти хаçатра çийĕнчех çырса пĕлтернĕ. "Çак самант тĕлĕкри пекех туйăнать", – чунне уçать арçын.

Унтан ăна чаçри склада вырнаçтарнă. "Эпĕ никампа та йăпăлтатман, упа пекех ĕçленĕ", – пытармасть Юрий Кириллович.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**





ЧĂРСĂРЛĂХ



# Чăнкă Муркашсем

**"Чăнкă" тесе ку таранччен хаçат-журналта кăнтăр енчи район çамрăкĕсем пирки ытларах çыратчĕç. Авăнăн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ ĕç-пуç хыççăн çак сăмах Муркашсемшĕн кăтартуллăрах пек туйăнчĕ... Юрĕ, эсир пирĕнпе пĕрле пулман, апла тăк нимĕн те курман, çавăнпах йăлтах йĕркипех каласа кăтартам.**

Хăнана-мĕне чĕнекен тупăнсан хăрах уран сиксе таçта çитме хатĕр эпĕ. Муркаш районĕнчи Йӳçкассинче пурăнакан тăхлачă çуралнă кунне паллă тума йыхравласан çавăнпах турткалансапăркаланса – хака ӳстерсе – тăмарăм: ара, текех эпĕ те 17-ри чиперкке мар, тăванăм та яш каччă мар, ӳкĕтлемессе те пултарать вĕт. Пĕтрĕ вара ура хуçса ташласси, ури авăнакан сĕтел хушшинче сăйланасси!

Палăртнă кун хăвăртах çитет вăл. Çурла уйăхĕ кăна пулнине пăхса тăмарăм – хур чĕпписем пит тĕрекленсех çитмен-ха та ĕнтĕ, çапах тытрăм та пĕрне кучченеçлĕх чикрĕм. Хутаçра пылак ытти çимĕç çумĕнче йӳççи те вырăн тупрĕ. Ăна, тĕрĕссипе, темиçе хут та тĕрĕслерĕм. Пĕр кунхи пек пулса тухассинчен шикленетĕп-çке-ха. Ара, пĕрре çапла хĕрĕн çемйипе хăнана пуçтарăнтăмăр. Мĕн кирлĕ пеккине ун чухне те хутаçа йăлт ярăнтартăмăр: парни-кучченеçне нимĕн те манса хăвармарăмăр. Пыратпăр çапла урампа саркаланса. Мăнукăм – ах, çав пиллĕкри мăнукăм-шĕвĕрĕм ытла та темĕн те пĕлет-çке манăн! – урам варринче хĕвĕшекен çынсен хушшинче тăп! чарăнчĕ те: "Эрех илме манмарăр-и?" – терĕ. Тахçан пĕрре çапла чăнах та маннăччĕ те çавна ниепле те асĕнчен кăлараймасть мар-и? Çавăнтанпа халĕ хутаçа тĕ-ĕплĕн тĕрĕслетĕп килтен тухиччен.

Хальхинче чиперех çитрĕмĕр Йӳçкассине. Мăнукăн та пире асăрхаттармалли сăлтав тупăнмарĕ. Хăнисем килсе тулнă тăхлачăн! Мускавран та çитнĕ. Пурте ăшă сăмах каларĕç. Тăхлачă хăй те пурне те ăшшăн тав турĕ. Эй, килнĕ хăнан çурăмĕ хитре тенине мансах ташă кĕввипе силлентĕмĕр анчах. Сĕтел тулли ĕçме-çимине шеллесе темиçе хутчен те лара-лара тухрăмăр. Çапах та киле каймаллах вĕт. Пирĕн вара Шупашкара çитмелле.

Урама тухрăмăр та – ай-уй! çын пырса çапсан та палласа юлас çук: сĕм тĕттĕм! Мĕнле çӳреççĕ кунта?! Тĕп хулара пурăнса цивилизацие хăнăхнă çав... Урапа пускаласа, куçа чаркаласа, алăпа хыпашласа пырса машинăна аран шыраса тупрăмăр вĕт. Çур çул шикленсе пытăм – хамăр машинăнах лартăмăр-ши, çынăнне вăрласа каймарăмăрши тесе... Киле çитиччен пăшăрханаттăм пулĕ те, Муркаша пырса кĕрсен хăрамалли урăх сăлтав тупăннипе кун çинчен туххăмрах манса каймăм. Тĕп урампа шăхăрса пыраканскерсене пире такамсем пӳлчĕç. Умра – темиçе машина. Малтанах инкек пулнă ĕнтĕ тесе сехре хăпрĕ. Куçа хĕскелесе пăхатăп та – сарлака урам варринче халăх хĕвĕшнĕ пек курăнать. Мĕн амакĕ? Пире пĕр çамрăк – хăранипе лайăхах сăнаймарăм çав, те инспектор тумĕпеччĕ, те çавăн евĕрлипе кăна – сулахаялла пăрăнма хистесех хушать. Кунта, эпир кăнтăрла килнĕ çулпа, кайма май çуккине калать. Эпĕ вара, турăшăн та калатăп, сулахаялла чупма хăнăхман. Мĕн тумалла? /Маларах сиксе ӳксе калам-ха: çав сулахаялла пăрăнманни пурнăçра усăллă кăна-мĕн – пирĕн Шупашкара çитмешкĕн сулахаялла мар, сылтăмалла пăрăнмалла пулнă, юрать çав ачана итлесе тӳрех вăл кăтартнă еннелле çаврăнмарăмăр/. Машина рульне шĕкĕр хуламăр еннелле пăриччен хайхи чăнкă çамрăкран çапах та ыйтса пĕлес килчĕ: мĕн пулса иртет кунта? "Корпоратив", – хуравлама ӳркенмерĕ тата ку. Корпоратив??? Çакăншăн Шупашкар çулне – тĕп çула тесе вула – картламашкăн камăн ирĕк пур вара? Ах, тарăхрăм та. Пуç тӳпекинчен пăс тухрĕ ахăр. Пĕрре – çĕрле, капла та нимĕн те курăнмасть. Тепре – тавра каймалли çулне пĕлместпĕр. Кун пек чухне инкек сиксе тухасси те часах. Муркашсемшĕн пулсан вара – икĕ айкки те тăвайкки.

Çакă кăна кăсăклă: Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе вырăнти тĕп паишник пĕлеççĕ-ши çамрăксем çĕрле мĕн хăтланнине? Те вĕсем яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа алă пусса пичет çапсах чунтан савăнмашкăн ирĕк параççĕ-ши? Çак ыйтăвăн хуравне "ЧХ" вулаканĕсемпе пĕрле питех те пĕлес килет.

**Çĕрлехи Муркашран Шупашкара чĕррĕнех çитнĕ ХĔРЕСТИН.**

КУЛЬТУРА



# Аслисенчен вĕренеççĕ

Пурнăçа юратакансем тата кĕнекепе туслашнисем кирек мĕнле çанталăкра та Вăрмарти тĕп библиотекăна пуçтарăнаççĕ. Çакăнта хĕрарăмсен "Сударушка" пĕрлешĕвĕ ĕçлет. Унăн ертӳçи Светлана Щербакова пурне те ырă сунса кĕтсе илет. Сĕтел çинче мăн хырăмлă сăмавар сас кăларса ларать, Светлана Михайловнаваскаса чей хатĕрлет. Курав стенчĕсем çинче – тĕрлĕ темăпа кăларнă кĕнекесем, журналсем.

Кашни тĕл пулу уява çаврăнать. Хăш-пĕр чухне юрă итлеççĕ вĕсем. Е хăйсемех юрлаççĕ, сăвă вулаççĕ. Ветерансем, тавра пĕлӳçĕсем, çыравçăсем хăнана кĕни те хăпартлантарать хĕрарăмсене.

"Сударушка" йышĕнчи хастарсем тавра курăма аталантарнисĕр пуçне ал ĕçĕпе те аппаланаççĕ. Йĕппе тата çекĕлпе çыхнă япаласем ытла та илĕртӳллĕ. Пĕрле пуçтарăнсан ăсталăх класĕсем ирттерме ансат. Ал ĕçĕсен куравĕсем йĕркелессине йăлана кĕртнĕ.

Хĕрарăмсем тĕрлĕ эреш çыхнă вăхăтра Светлана Щербакова кĕнекери, журналти сĕнӳ-канашпа паллаштарать. Çакă кил таврашне тирпей-илем кĕртме те, выльăхчĕрлĕх самăртма та, пысăк тухăç илме те пулăшать. Кунта пуçтарăнакансем çавнашкалах мода çĕнĕлĕхĕсемпе кăсăклансах тăраççĕ. Унсăр пуçне çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, сывлăх, пенси ыйтăвĕсем интереслентереççĕ вĕсене. Интернет тата журналти статья урлă йăлтах уçăмлатма пулать иккен.

"Сударушкăсем" патне "сударьсем" те кĕркелеççĕ. Арçынсемпе хĕрарăмсен калаçмалли, сӳтсе явмалли тем чухлех тупăнать.

Нумаях пулмасть çак пĕрлешӳ хăйĕн 5 çулхи юбилейне паллă турĕ. Сăн ӳкерчĕк альбомĕ иртнĕ кунсене аса илтерчĕ.

Ларма тухни, улаха пуçтарăнни тĕрлĕ ăру çыннисене çывăхлатать. Çамрăксем аслисен пурнăç опытне ăша хываççĕ.

**Татьяна ДОРОФЕЕВА-МИРО.**

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Йывăрлăх хăратмасть

Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпӳртре пурăнакан Павловсен витере йыш хушăнсах пырать. Мăйракаллă шултра выльăх картиш туллиех. Лашисемпе тихисем кăна вун пĕрĕн. "Вĕсенчен пĕри кăна ĕçлекенни. Ыттисене упăшка чун киленĕçĕ валли усрать", – терĕ кил хуçи арăмĕ. Çĕр ĕçне, выльăх-чĕрлĕхе мĕн ачаран юратнăран хресчен фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ Павловсем. Çавăнпа пушă вăхăт пачах çук вĕсен. Ку тăрăхра утă уйăхĕнче пулнăччĕ. Халăх хĕрсе кайсах хирте вăрлăх сухан кăларатчĕ. Лайăх çанталăкпа усă курса юласшăн пурте. Владимир Николаевичпа Светлана Валентиновна та ял çыннисенчен кая мар лартнă ăна. Унсăр пуçне хирте 1 гектар çĕр улми, 30 сотка кишĕр, çавăн чухлех суханчĕкĕнтĕр çитĕнтереççĕ. Ял çыннисенчен тара илнĕ çĕр çинче кашни çулах тĕрлĕ йышши тыр пул туса илеççĕ.

Кил хуçи арăмĕ Светлана Павлова Патăрьел тăрăхне Красноармейски районĕнчен качча килнĕ. "Çакăн пекех ĕçлемеллине пĕлнĕ пулсан ку еннелле ура ярса пусмăттăм", – терĕ шӳтлесе. Чăн та, хĕрарăмăн пахчара çум курăкпа кĕрешнисĕр, выльăх-чĕрлĕхпе тăрмашнисĕр пуçне ĕçĕ тата нумай-çке. Çапах та çу кунĕсене, пахча çимĕç пухса илнĕ вăхăта кăмăллать ял çынни. Унăн илемĕпе киленме те, уявсенче канма та пĕлет. Павловсем те çавнашкалах.

Икĕ ывăл ӳстернĕ вĕсем. Асли салтакран таврăннă хыççăн Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче 4-мĕш курсра вĕренет. Кĕçĕнни Денис 15 çулта. Тăххăрмĕш класс хыççăн Шупашкарти Федор Павлов ячĕллĕ музыка училищине вĕренме кĕме ĕмĕтленет. "Денис Павловсăр ялта пĕр уяв каçĕ те иртмест. Шоу-конкурса хутшăнса "Ял каччи" ята та çĕнсе илчĕ вăл", – калаçăва хутшăнчĕ Туçа ял тăрăхĕн культурăпа вулавăш аталанăвĕн центрĕн ертӳçи Лидия Сеприханова. 2013 çулта "Мехелте" те финала тухнă Денис.

Çăмăл мар лава туртмашкăн çаврăнăçуллă та харсăр пулмалла. Мал ĕмĕтпе пурăнакан Павловсем пĕрпĕрне пулăшса пыраççĕ. Тенкĕ çумне пус хушасси çăмăлах мар хальхи вăхăтра. Çакă çемьере пĕр-пĕрне ăнланнинчен те, хисепленинчен те килет. Пуян та харсăр, çаврăнăçуллă, ĕçре хастар Патăрьелсене ăмсанакан та пур пуль. Анчах та тулăх пурнăçпа чыс-хисепе вĕсем ĕçченлĕхе тата тăрăшулăха кура çĕнсе илнине Павловсен тĕслĕхĕ те çирĕплетет. Çакăн пек çемьесем çинче тытăнса тăрать те ял.



**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Какай кукăлĕ



**Чуста çăрма 2 çăмарта, 0,5 чей кашăкĕ тăвар, 1 стакан çăнăх, 1 стакан турăх, 0,5 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Ăшне хума 300 грамм какай фаршĕ, пуçлă 2 сухан, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Фарша вĕтетнĕ суханпа, тăварпа пăтратмалла. Турăха апат содипе хутăштармалла. 5 минутран çăмарта, çăнăх, тăвар ямалла. Чустан çур пайне çатмана ямалла. Ăна фаршпа сухан хутăшĕпе витмелле. Унтан юлашки чустана сармалла. Какай кукăльне 40 минут пĕçермелле.

### Кишĕр кексĕ

**400 грамм кишĕр, 100 грамм шампиньон, 3 çăмарта сарри, вĕтетнĕ 0,5 стакан сухари, тип çу, тăвар кирлĕ.**

Кишĕре теркăламалла, сĕткенне пăрса кăлармалла. Вĕттĕн туранă кăмпана тип çупа ăшаласа кишĕрпе, çăмарта саррипе, сухарипе пăтратмалла, тăвар хушмалла. Кекс формине тип çу сĕрсе кишĕр хутăшне тултармалла. Ăна духовкăра 20-25 минут пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен кишĕр кекснe хăйма сĕрмелле.

### Тăпăрч хăпартăвĕ

**200 грамм тăпăрч, 2 çăмарта, 4 апат кашăкĕ сахăр, 7 апат кашăкĕ манна кĕрпи, чĕптĕм тăвар, 0,5 стакан турăх, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 1 апат кашăкĕ тип çу, исĕм кирлĕ.**

Тăпăрча сахăрпа, çăмартапа пăтратмалла, тăварпа манна кĕрпи хушмалла. Çак хутăша 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

Çатмана тип çу сĕрмелле, манна кĕрпи сапмалла. Чуста тултарсан 30-40 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Ăшне тултарнă баклажан

**2 баклажан, чăхăн кăкăр тĕлĕнчи пайĕ, 100 грамм кăмпа, пуçлă 2 сухан, 1 помидор, тип çу, 100 грамм сыр, майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Баклажана çурмалла касса 20 минутлăха тăварлă шыва ямалла. Тăваткалласа каснă какая тип çупа ăшаламалла, вĕтетнĕ суханпа кăмпа хушмалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Баклажан ăшне кăларса турамалла, тип çупа ăшаламалла. Ăна какай хутăшĕпе пăтратмалла. Çакна баклажана тултармалла. Çиелтен помидор çаврашкисене хумалла, теркăланă сыр сапмалла, майонез сĕрмелле. Баклажана духовкăра 20 минут пĕçермелле.

### "Кăмпа"

**Путене 10 çăмарти, 6 черри помидор, 2 апат кашăкĕ майонез, укроп кирлĕ.**

Пĕçернĕ помидора тата çăмартана çурмалла касмалла. Укропа вĕттĕн турамалла. Помидорпа çăмартана кăмпа майлă шăрпăк çине тирмелле. Çиелтен укроп сапмалла, майонез сĕрмелле.

### Кăмпа пĕлĕмĕ

**Чуста çăрма 0,5 стакан шыв, 3 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума пуçлă 2 сухан, 0,5 килограмм кăмпа, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Чуста çăрмалла, çаврашкасене касса кăлармалла. Вĕттĕн туранă кăмпапа сухана тип çупа ăшаламалла, пăрăçпа тăвар хушмалла. Кашни çаврашка çине кăмпа хутăшĕ хурса пĕлĕм тумалла. Ăна тăвар хушнă шывра пĕçермелле. Пĕлĕме услам çупа çимелле.

### Таратор

**1 литр турăх, 3-5 хăяр, 5 шăл ыхра, хуппинчен тасатнă 1 стакан açтăрхан мăйăрĕ, укроп, 2-3 апат кашăкĕ тип çу, 0,5 литр минерал шывĕ, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Турăха минерал шывĕпе пăтратмалла. Хăяра тăваткалласа турамалла, açтăрхан мăйăрне, ыхрана, укропа вĕтетмелле. турăхпа минерал шывне хăяр, açтăрхан мăйăрĕ, ыхра, укроп, тăвар, пăрăç, тип çу ямалла. Çак хутăша 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### Пылак помидор

**3 килограмм помидор, 1,5 литр шыв, 1 апат кашăкĕ тăвар, 3-4 апат кашăкĕ сахăр, 1,5 апат кашăкĕ уксус, 3 шăл ыхра, пăрăç, 2-4 гвоздика, укроп, 1 лавр çулçи кирлĕ.**

Стерилизациленĕ банкăсене помидор тултармалла, ыхра, пăрăç, гвоздика, укроп, лавр çулçи хушмалла. Унтан вĕрекен шыв ямалла. 10-15 минутран шыва тепĕр хут вĕретмелле, сахăр, тăвар хушмалла. Маринад тултарса банкăсене хупмалла.

### Пахча çимĕç салачĕ

**10-шар баклажан, помидор, пылак пăрăç, кишĕр, пуçлă сухан, вĕтетнĕ петрушка, укроп, сельдерей, йÿçĕ пăрăç, 9 процентлă 3 апат кашăкĕ уксус, ыхра кирлĕ.**

Баклажана – çаврашкан, помидора, пылак пăрăça, сухана – тăваткалласа касмалла, кишĕре теркăламалла. Баклажана тăвар сапмалла, сехетрен пăрмалла.

Пахча çимĕçе уйрăмшарăн ăшаламалла, петрушка, укроп, сельдерей, йÿçĕ пăрăç хушмалла. Тутă кĕртме тăвар, пăрăç, уксус ямалла. Салата çур литр банкисене ярса 1 сехет стерилизацилемелле.

УЛМА-ÇЫРЛА

# Сиплĕ пан улми

Пан улми чылай чир-чĕртен сыхланма, ыратнине ирттерме, бактерисене пĕтерме, пыра тасатма пулăшать. Кунсăр пуçне вар-хырăма çемçетет, шăк хăвалать, тар кăларттарать, суран ÿт илессине хăвăртлатать.

Юн сахал, витамин çитмен, юнлă варвитти, юн пусăмĕ ÿснĕ чухне те пан улми çиме сĕнеççĕ. Самăрălсан, ÿт-пÿ шыçăнса тăртансан тата юн пусăмĕ ытлашши пысăклансан "çăмăл апат кунĕсем" йĕркелени аван. Эрнере пĕр кун 1-1,5 килограмм пан улми кăна çимелле тата 1-2 стакан шыв ĕçмелле.



Пан улми юн çаврăнăшне йĕркене кĕртет тата чĕре тĕртĕмĕн ĕçне лайăхлатать. Çак çимĕç çамрăклăха упрама май парать, организм ватăлнине чарать. Ку унра Е витамин нумай пулнипе çыхăннă. Пан улми ытти витаминпа, эфир çăвĕсемпе, белокпа, фитонцидсемпе те пуян. Унра клетчатка нумай. Вăл вара организмран токсинсене, йывăр металсен тăварĕсене, микробсене кăларма, холестерин шайне пĕчĕклетме пулăшать.

Вар-хырăм ĕçĕ пăсăлнипе чирлекенсен чĕрĕ пан улмипе усă курассинчен сыхланмалла. Унсăрăн сывлăх пушшех те хавшама пултарĕ.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

### Килти лосьон

1 чей кашăкĕ пыла вĕретнĕ 2 апат кашăкĕ шыва ярса пăтратмалла. Сивĕнсен çур лимон сĕткенĕ хушмалла. Каçхи кремпа усă курччен пите çак лосьона сĕрмелле.

### Çĕпре маски

20-25 грамм çĕпрене хăйма пек çăраличчен сĕт ярса пăтратмалла. Ăна пите сĕрмелле те 15 минутран ăшă шывпа çуса ямалла.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Кĕрхи ĕçсем

Кĕркунне пахча çимĕç пухса илнисĕр пуçне чылай çимĕçе акса-лартса та хăвараççĕ. Вĕсен шутне петрушка, укроп, кишĕр, сельдерей, шпинат, кăшкар ути кĕрет.

Чи пĕлтерĕшли – акас вăхăта шута илмелле: çĕр шăниччен çимĕç шăтса тухмалла мар. Каçхине шăнтма пуçласан, кăнтăрла çĕр кăшт ирĕлсен – салат, кишĕр, укроп акма чи лайăх вăхăт. Ыхрана та çак вăхăтра лартса хăвармалла. Çĕр 5 сантиметр шăнсан кăшман акмалла. Сельдерей, кишĕр, укроп валли 2 сантиметр тарăнăш йĕр тумалла, çиелтен 3 сантиметр тарăнăш çĕрпе витмелле, кăшт хытармалла, шăвармалла. Ыхрана йĕрпе мар, пĕр-пĕринчен 10-15 сантиметр хăварса тарăнрах лартмалла. Сухана 2-3 сантиметр хулăнăш çĕрпе витмелле, сивĕсем пуçлансан çиелтен тата 8-10 сантиметр торф хумалла.

# Сунчăкпа... çырла пуçтарма

Сырлан çырлине пуçтарма çăмăл мар. Çак мелпе усă курсан ĕç 2-3 хут çăмăлланĕ.

Çырлана турапа турамалла, аяла кутăн май çаврăрса сунчăк тытмалла.

ШУТА ИЛМЕ

# Кĕпе вараласан

Тутăх лекнĕ кĕпене пăрахăçлама васкамалла мар. Вараланнă вырăна тÿрех лимон сĕткенĕпе йĕпетмелле те утюгпа типĕтмелле. Кайран лĕп шывра çуса ямалла. Енчен те тутăх тахçанах лекнĕ пулсан япалана уксус хушнă шывра тытăр /1 стакан шыва – 1 чей кашăкĕ уксус/, хыççăнах лĕп шывра чÿхĕр.

Чей тăкăнсан тÿрех супăньлĕ ăшă шыва чиксе лартмалла /1 литр шыва çур чей кашăкĕ кальци соди ямалла/.

Улма-çырла сĕткенне сĕт лайăх тасатать. Чечеклĕ кĕпене сĕтре темиçе сехет тытмалла, кайран лĕп шывра супăньпе çумалла. Шурă тĕслĕ мамăк кĕпене сивĕ шывра çуса тасатма пулать. Вăл сарăхса ан кайтăр тесен унта кăшт уксус хушни пулăшĕ.

Симĕс курăкпа вараланнă вырăна тасатма нашатырь спирчĕ пулăшать. Кĕпене ăшă шывра ислетмелле те мамăка спиртра йĕпетсе курăк лекнĕ вырăна сăтăрмалла. Кун пек чухне тăварлă шыв та пулăшать /çур стакан ăшă шыва – 1 чей кашăкĕ тăвар/.

# Лимон витĕмĕ

Килти е хваттерти ырă мар шăрша алă айĕнчи япаласемпех пĕтерме пулать. Кухньăра газ плити çине лимон хуппи хумалла. Пÿлĕмсенче те çак çимĕçпех ырă шăршă сарма пулать. Ăна валли 1 лимон тата корицăпа гвоздика кирлĕ. Лимона шĕвĕр патакпа шăтарса гвоздика чикмелле. Çакăн хыççăн çимĕçе хут хутаçа чиксе пĕр эрнелĕхе типĕ те ăшă вырăна хумалла. Кайран ун çине корица сапмалла. Тутлă шăршă саракан çаврашкана пÿлĕме çеç мар, шкапа та хума юрать. Вăл кивĕ арча шăршине те пĕтерет.

* * *

- Вĕри шыв янă май çĕçĕ е тимĕр япала çине лартсан кĕленче çурăлмасть.
- Сивĕ шывра йĕпетнĕ çĕçĕпе турасан сухан куçа кĕмест.
- Çу сĕрсен каснă сухан шанмасть. Лимон сĕткенĕпе йĕпетнĕ çĕçĕпе туранă сухан лайăх упранать.
- Шăнтнă пуçлă сухан та апатра тутлă.
- Шăмăллă какая сивĕ шыва ярсан шÿрпе тăрă пулать.
- Çатма тĕпĕ çунчĕ-и? Унта сухан хуппи пĕçермелле те пĕр каçлăха исленме лартмалла.
- Юлнă кавăнпа ним тума аптратăр-и? Тураса шăнтмăша хурăр: пăтă пĕçерме юрăхлă пулĕ. Ирĕлтерсен тути улшăнмасть.
- Гриль хатĕрличчен çатмана тул енчен супăньпе сăтăрмалла. Капла савăта çуса тасатма çăмăлрах.
- Кашни техĕмлĕхе уйрăм савăтра упрамалла, хупăпа витмелле. Типĕ алăпа е кашăкпа илмелле.
- Торт е кукăль пĕçернĕ чухне духовка алăкне тăтăш уçма юрамасть – температура улшăннине пула чуста хăпарса пиçмест.
- Чылай вăхăт упраннă çĕпрене ăшă шыва ямалла, çиеле тухрĕ тĕк – унпа усă курма юрать.
- Пĕçернĕ çĕр улмине теркăласа чустана ярсан /1 килограмм çăнăх пуçне 2-3 çĕр улми/ кукăль кăпăшка та çемçе пулать.
- Çĕпре хушнă чустара сахăр сахал пулсан кукăль пичĕ хĕрелсе пиçмест, ытла нумай ярсан час хăпармасть.





КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Тĕрĕс арăм

«Пурнăç тытса пырасси хĕрарăмран нумай килет. Лайăх упăшка – хĕрарăм тивĕçĕ. Арçын ăнăçлăхĕнче хĕрарăм тÿпе хывать», – çапла ăс паратчĕ атте-анне. Тĕслĕх вырăнне пĕлĕшсене илсе кăтартатчĕ. «Кÿршĕ Якурах илер. Арăмĕн сăмахĕнчен иртмест, мĕн пур укçана киле илсе килет. Пахчара та ĕçлет, хуньмăшне те пулăшать. Хăй вара – пуçлăх, вăл ертсе пыракан предприятире 50 çын ытла. Тепĕр урамри Якку арăмĕ – чисти пăшатан. Темĕнле шайри пуçлăх патне те ситет, кирек мĕнле ыйтăва та татса парать. Хăй тăрăшнипех упăшкине депутата кăларчĕ вĕт...» – тăкăнатчĕ сăмах. Мана тĕрĕс арăм суйлама вĕрентетчĕç вĕсем. Эпĕ тĕпкĕç-çке, вĕсен ăратне тăсаканĕ, кил-çурта тытса пыраканĕ.

Темĕнле йывăр вăхăтра та атте-анне мана аслă пĕлÿ пама тăрăшнă. «Сана çын тăвассишĕн сахал мар укçа хывнă. Ас ту, çакă харама ан кайтăр. Пире хăвăн пекех аслă пĕлÿллĕ кин кирлĕ», – вĕçĕмех аса илтеретчĕ атте. Хăта-тăхлачăра хамăрпа пĕр шайри çынсене курасшăнччĕ вăл. Эпир чухăнсен шутĕнче пулман, тар кăларса ĕçлесе мул пухнă. Сăмахран, аслисем ирхи улттăччен çывăрса выртнине ас тумастăп эпĕ. Аттепе анне ир-ирех выльăх патне пĕрле тухатчĕç. Анне ĕне кăна сăватчĕ, ытти ĕçе йăлтах атте пурнăçланă. Вăкăр, темиçе пуç сысна усранă. Хĕрарăма упрама, чечек пек пăхма пĕлетчĕ çав атте. Аннене сивĕ сăмах калама мар, ун çине чалăшшăн пăхнине те курман. Тĕлĕнмелле çак хутшăну маншăн тĕслĕх вырăннеччĕ. Çур сăмахранах ăнланатчĕç, пĕр евĕр шухăшлатчĕç вĕсем. Чун шайĕнчи çыхăну çирĕпчĕ. Тен, çавăнпах атте вилнĕ хыççăн анне те нумаях пурăнаймарĕ, çĕре кĕчĕ. Вĕсем пил парса хăварнине ĕмĕрне те манмастăп. «Ывăлăм, хуçалăха ан юхăнтар, эпир вĕрентнĕ пек тĕрĕс-тĕкел пурăн, пурнăçа çирĕп тытма пĕлекен арăм туп. Вара йăлтах ăнăçать...» – терĕ анне.

Çавнашкаллине шыраса эпĕ 30 урлă та каçса кайрăм. Пытармастăп, хĕрарăм чылай пулнă манăн. Савнисем те, савманнисем те... 25-ре чухне Света ятлă чиперккене кăмăлларăм. Хÿхĕмлĕхĕпе, чĕлхе-çăвар япшарлăхĕпе тыткăнларĕ. Вăл мĕнле çемьерен пулнине пĕличчен эпĕ туйăмсен тыткăнне кĕрсе ÿкнĕччĕ ĕнтĕ. Çамрăк, юн вылять мар-и? Света тăванĕсем пирки калаçма юратмастчĕ, кайран, çывăхланнă хыççăн кăна, йăлтах çиеле тухрĕ. Амăшĕ пепкисене пăрахса ют арçын патне тухса кайнă иккен. Хĕрсем ашшĕпе ÿснĕ, лешĕ сыпкалама юратнă... Савнă пикем пасарта сутуçăра ĕçлетчĕ. Унпа пĕр шайри çынсем марччĕ çав эпир. Эпĕ, аслă пĕлÿ илнĕскер, заводра бригадирччĕ, мана пай пуçлăхне кусарма хатĕрлетчĕç. Светăн гитара евĕр кĕлеткине ыталамасăр, вăрăм та кăпăшка çÿçне ачашламасăр пурăнма йывăрччĕ. Анчах атте-аннене сăмах панă эпĕ, темле пулсан та ăна тытмаллах. Света ача çуратасси çинчен калаçма тытăнсан кăмăла пĕр чăмăра пухрăм та нимĕн те ăнлантармасăрах çухалтăм. Вăл мана чылайччен шырарĕ, ĕçе те пынăччĕ. Анчах эпĕ унăн куçĕ умне текех курăнмарăм.

Хамăн вара чунăм ырататчĕ. Чылаях асапланмарăм эпĕ, шалти туйăмсене хамах вĕлертĕм. Света тĕлне лайăх арçын лекессе шанатăп, унăн умĕнче айăплă туйса чылайччен пурăнтăм. Ашшĕ-амăшĕшĕн вăл айăплă мар-çке.

Кĕçех Светăна манма пулăшаканĕ тупăнчĕ. Алена пирĕн заводра бухгалтерта ĕçлетчĕ. Аслă пĕлÿллĕ, лайăх çемьерен. Унăн ашшĕ тепĕр пайра пуçлăх çумĕччĕ. Хĕрне вăл тăрăшнипе ĕçе вырнаçтарнă. Эпĕ ăна уçăлма чĕнтĕм, кинона кайрăмăр. Пусĕнче ку хĕрĕн капăр тумланасси, ют çĕр-шывсем тăрăх янккаса çÿресси кăна пулнине сисрĕм. Пĕр сăмахпа – пуян арçынна качча тухса шик! шăхăрма ĕмĕтленет Алена. Виççĕмĕш хут тĕл пулсанах вăл мана ювелир лавккине сĕтĕрчĕ, парне илсе парасса кĕтрĕ-ши? Сăнĕ-кĕлетки – моделĕнни пекех, чăнах та, Аленăн. Анчах хĕрарăмра çакă кăна пĕлтерĕшлĕ мар-çке. Чунсем çывăххине туйманран калаçма пăрахрăм. Çакăншăн кÿреннĕскер чылайччен мăртăхса çÿрерĕ. Мĕнле çын пулни уйрăлнă чухне аван палăрать тесе ахальтен каламаççĕ иккен... Ÿлĕмрен ĕçри пĕр хĕре те çывăха ярас мар тесе тĕв турăм.

Атте-анне чĕрĕ-сывă чухне яла канмалли кун кăна килеттĕм, юлташсемпе пÿлĕм тара илсе пурăнаттăмăр. Яш ĕмĕр кичем иртмен манăн, канма-савăнма пĕлеттĕмĕр, унта хĕрсемсĕр пулман паллах. Тусăн çуралнă кунĕнче Наташăпа паллашрăм. Унра мана йăлтах тивĕçтерет пек туйăнчĕ-ха. 3-ри ывăлĕ пуррине кайран тин пĕлтĕм. Наташа авланнă çын еркĕнĕ пулнине, вăл ăна укçапа пулăшнине пытармарĕ. Малтан пур хĕр те йĕркеллех пек туйăнать, çывăххах паллашатăн та кăлтăк асăрхатăн, çавă тÿрех чуна сивĕтет. Çулсем кайнă май туйăмпа мар, ăспа пурăнма тытăнтăм эпĕ.

Лайăх хĕр тупма çăмăл мар иккен. Туртакан-ĕçекеннисем патне кăмăл выртмасть, ăс-тăн шайне кура айван хĕрсем те ман валли мар. Теприсем ялта пурăнма килĕшмеççĕ. «Унта канмалли кун канма кайса çÿрĕпĕр», – тенине епле йышăнас-ха? Пирĕн ял хула çывăхĕнчех, килĕм-çуртăм хăтлă. Пĕччене тăрса юлсан та тирпейлĕхе тытса тăтăм. Çăмăл машинăпа хулана ĕçе çÿрерĕм.

Турă çырнине тупрăм çапах та. Тĕрĕсрех, тупса пачĕç, тĕл пулу та йĕркелерĕç – ăнсăртран имĕш. Хăнăхнă йăлапа Маша çине шанмасăртарах пăхрăм. Чунĕпе çирĕп хĕр пулнине пĕрле çул çÿреве тухсан ăнланса илтĕм. Юлташсемпе Атăл леш енчи вăрманти илемлĕ пĕр кÿлĕ хĕррине кайнăччĕ. Çавăн чухне чылайччен çĕтсе çÿрерĕмĕр, 40-е яхăн çухрăм çуран утрăмăр. Пике пачах найкăшмарĕ, шÿтлерĕ, ывăннине кăтартмарĕ. Ушкăнра хăйне епле тытни те килĕшрĕ, темĕн те пĕлет вăл, кĕске ĕмĕрĕнчех таçта та çитсе курнă. Сасси уçă – итленĕçемĕн итлес килет. Пулă тытма юратать, спортпа питĕ туслă. Вăл ишнине пăхса ытармалла мар... Кунашкал хĕр сывă ачасем çуратасси иккĕлентермерĕ.

Çак çул çÿрев хыççăн чунра темĕн йăшăл! турĕ, сивĕ пăр татки ирĕлчĕ-ши? Машăна юратса пăрахрăм, унăн сассине илтмесĕр çывăрса каяймастăмччĕ. Шăпана урăх тĕрĕслес темерĕм, висĕ уйăх çÿренĕ хыççăн Машăна качча тухма ыйтрăм.

Халĕ пирĕн икĕ ывăл çитĕнет. Арăма малтанхинчен те хытăрах юрататăп. Ăна чылай шыранă-çке эпĕ. Çак çĕр çинче пире унпа пĕр сукмакпа утмашкăн турă пÿрнĕшĕн савăнатăп. Атте-анне тивлечĕпе пирĕн çемье çирĕп пуласса шанатăп.

**ВЛАДИМИР.**
Муркаш районĕ.



ЧУНРИ

# Хĕвел шевли

«Хĕр чухне – хĕрĕх» теççĕ. Чăнах, пĕри пăхманшăн пăшăрханса ларман. Йĕри-тавра мĕн чухлĕ каччă та, теприне саваканшăн макăрса вăхăта ирттермелле-и? Манран кĕтсе илеймĕ. «Апла тăк тивĕç мар мана», – ăшра çакнашкал пĕтĕмлетÿ туса чĕрери пушара сÿнтернĕ. Çапла-çапла, туйăмпа та хуçаланма пулать.

Нумаях пулмасть кĕлетри пĕр арча куç тĕлне пулчĕ. Тахçантанпах уçса пăхман ăна. Унта – ĕлĕкхи савнисен парнисем, çырăвĕсем. Вăчăра та, çĕрĕ те, эрешлĕ ытти япала та кивелмен. Хăй хаклăхне кăна çухатнă вĕсем. Шăккалат хучĕсене те пуçтарса хуни кулăшла паллах. Çемçе теттесене кăларса пăрахма шел. Çав япаласем тахçанхи туйăма тĕппипех çухалма памаççĕ. Чун ăшăлăхĕпе тулнă вĕсем. Çырури сăмахсем хăйсен пĕлтерĕшне, витĕмне çухатнă ĕнтĕ. Пур пĕрех çакă – иртнĕ вăхăт палли. Урăхла каласан, манăн пурнăç историйĕ. Унтанпа 15 çул иртнĕ пулин те кĕвĕллĕ открыткăсем юрату юррипе кăмăла уçăççĕ. Ун чухнехи туйăм та çавăнтах пытанса юлман-ши? Çук, чĕре йăшăл тумасть.

«Манпа хăвна кирлĕ пек усă кур та кайран, йăлăхтарса çитерсен, хĕвел çаврăнăш хуппине сурса пăрахнă пек кăларса ывăт...» – тени аса килчĕ. Ун пекех хăтланман паллах. Утас çулсем хĕресленсе илнишĕн, кайран уйрăлса кайнишĕн пĕр чĕптĕм те кулянмастăп. Ку – пурнăç йĕрки.

«Эпĕ авланатăп. Анчах сана туя чĕнместĕп...» – кĕске çак çырăва пĕрле çитĕннĕ каччă тыттарнăччĕ. Нумай чупрĕ вăл ман хыççăн. Ывăçĕ-ывăçĕпе канфет çитерчĕ. Темшĕн юратаймарăм эпĕ ăна. Вăл вара хăйĕн туйăмне никамран та пытарман. Çитĕнсен те чун ыратнине шăнăçтараймасăр ачалла тытатчĕ хăйне. Пальто, куртка пиçиххийĕсене туртса илетчĕ. Çапла майпа хăйĕнпе калаçтарас килетчĕ унăн. «Пит çăмартинчен те пулин чуп ту...» – тахăш самантра ыталаса илетчĕ вăл.

Çемье çавăрасси пирки чи малтан мана пĕлтерчĕ вăл. Пулас мăшăрĕпе çыру урлă паллашнă, кайран хулара тĕл пулнă ахăр. «Вăйпа юраттараймăн. Манăн хĕрарăм ăшшине туяс килет», – тепрехинче пĕр самантлăха чарăнма ыйтса сăмах хушрĕ вăл. Туй кĕрекине лармарăм, сăлтав тупса хулана тухса кайрăм. «Тавах манăн чуна хĕвел шевли пек çутатнăшăн...» – ытла илемлĕ çырнă-çке. Мĕнле хаклама пĕлмен çуллă чĕлхеллĕ çав яша?

Ĕлĕкхи савнисем чунран юратнине туйнă-курнă-пĕлнĕ. Тавах вĕсене ăшăлăхне шеллеменшĕн, çепĕç сăмахсемпе çунатлантарнăшăн, парнесемпе хавхалантарнăшăн. Манăн çул çинче тĕл пулнă çамрăксем телей тупнăшăн савăнатăп.

Манăн мăшăр та хĕвел шевли пекех. Вăл та ачаш сăмахсемпе чĕннине юратать. Эпĕ нумайăшне малтанхи савнисенчен вĕренсе юлнă. Эх, вĕçĕ-хĕррисĕр юрату туйăмĕ... Çак самантпа киленсе, ырă малашлăха кĕтсе пурăнмалла. Иртнĕ кунсен асамлăхне каялла арчана питĕрсе хуратăп.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**







**ЙĂЛА-ЙĔРКЕ**

# Кăçал килес теменччĕ...

**Шухăшлатăп та тĕлĕнетĕп – мĕн чухлĕ ырă йăла-йĕрке халăхăн! Туй йĕрки уйрăмах пуян. Пирĕн тăрăхра кашни ялăн уйрăлса тăрать вăл. Выла тăрăхĕнчи чăвашсен йăли-йĕркипе паллаштарам-ха сире.**

Малтан, паллах, хĕре çураçаççĕ. Пулас мăшăр пĕр-пĕрне килĕштерсен çураçма пынисем ашшĕ-амăшне, çывăх тăванĕсене кучченеçпе сăйлаççĕ. /Хĕр качча кайма килĕшмесен илсе пынă кучченеççене пуçламаççĕ те/. Пикен ашшĕ-амăшĕ сĕтел çине апат-çимĕç хатĕрлет, сăра ĕçтерет. Унтан сĕтел хушшинче ларакансем туй хăçан пуласси пирки сăмах хускатаççĕ. Çав хушăра тăван-пĕлĕшре кам та пулин вилнĕ пулсан васкамаççĕ: хĕрĕх кунне ирттермесĕр туй тума юрамасть.

Хĕр илме чи малтан туй пуçĕ каять. Вăл ертсе пырать. Ĕлĕк хĕр илме лашасемпе кайнă, халĕ вара – çăмăл машинăсемпе. Кĕçех туй халăхĕ кĕрлесе çитет. Карталанса купăс çеммипе ташлама пуçлаççĕ – хапхаран картишне кĕричченех. Пĕр-пĕр ăста такмаклакан туй арăмне ыттисем пулăшаççĕ. Харăс юрлаççĕ.

Вăйлă çумăр çунипе
Кил хушшипе шыв юхать.
Ни ал çума юрамасть,
Ни пит çума юрамасть.
Ах, кинĕм Тарье пур,
Аçу-апу килĕнче
Ĕмĕр ларма юрамасть,
Тухас пулать ирĕксĕр.

Туй арăмĕсем чылай чухне шӳтлесе юрлаççĕ, шилĕк курма пынă çынсене тĕлĕнтереççĕ, култарса та илеççĕ.

Кăçал килес теменччĕ,
Кăçал килес теменччĕ,
Ашшĕ пулчĕ эрехшĕн,
Амăшĕ пулчĕ сăришĕн,
Хĕрĕ пулчĕ каччишĕн,
Çавăнпа илме килтĕмĕр.

Ах, тарăхрăм, тарăхрăм,
Хам шăллăма тарăхрăм.
Çак таврана ма килес?
Хамăр ялтах хĕр илес:
Сарри тесен сарри пур,
Хури тесен хури пур.

Кĕрхи çумăр, вĕт çумăр,
Çапах çĕре йĕпетет.
Çич ют сăмахĕ пĕр сăмах,
Çапах куççуль кăларать.
Ах, кинĕм, чипер кин,
Мĕнле юраса пурнăн-ши?

Туй халăхне кĕтсе илме хапха умне сăра-эрехпе, апат-çимĕçпе тухаççĕ, пӳрте кĕме чĕнеççĕ. Кĕрĕве утма машинăран тухнă чухне кавир е тĕртнĕ пир хапха умне çитичченех сарса хураççĕ. Пулас кĕрӳ кавир çине укçа пăрахать. Сахалрах пăрахрĕ пулсан ăна хапха уçса кĕртмеççĕ. Нумай хурсан хапăл тусах кĕртсе яраççĕ.

Туй арăмĕсене, арçынсемпе каччăсене эрех-сăра ĕçтермесĕр, кучченеçпе сăйламасăр пӳрте кĕртмеççĕ. Ун хыççăн сĕтел тулли апат-çимĕçпе сăйлаççĕ. Пĕр çынна та кĕрекене лартмасăр кăларса ямаççĕ. Кĕреке хушшинчен туй халăхĕ вара урама тухать, карталанса ташлать, хăш-пĕр чухне ял урамĕ вĕçне çитичченех тăсăлать çак карта.

Шурă-шурă çăмарта,
Шуратрăмăр, çирĕмĕр,
Ах, кинĕм, чипер кин,
Юратрăмăр, илтĕмĕр.
Юратас çук, илес çук,
Çак тарана çитес çук.

Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен,
Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен
Тăрса юлчĕ пăтара.
Пирĕн кинĕн савниййĕ
Тăрса юлать урамра.
Çапла мар-и, тăвансем?

Вăйлă туйсенче икшер-виçшер купăсçă ташлаттарать халăха. Кил картинче е урамра туй курма пынă ял çыннисене те хăналаççĕ.

Качча тухакан пикен çывăх çыннисене кĕреке хушшине лартаççĕ. Ашшĕпе амăшĕ пил параççĕ. Хĕрпе каччă ашшĕ-амăшĕ умне чĕркуçленеççĕ, тăма хушсан çĕкленеççĕ, каччă килне кайма хатĕрленеççĕ. Тăванĕсене парне параççĕ. Хĕр туприне лав çине е машина çине тиеççĕ. Арча, тумтир, минтер, тӳшек... Çĕнĕ çын çуралса ӳснĕ килпе сыв пуллашать. Çуралнă килтен, тăван ашшĕ-амăшĕнчен, тăванĕсемпе, хурăнташ-пĕлĕшĕпе ĕмĕрлĕхех уйрăлать, çичĕ юта каfive.

Ах, кинĕм, чипер кин,
Аçу пӳрчĕ çăка пӳрт,
Мĕнле хурланса тухăн-ши?
Çич ют пӳрчĕн вун виç йӳн,
Мĕнле чӳхенсе çӳрĕн-ши,
Мĕнле юраса пурнăн-ши?
Ай, пирĕн Тури Вула,
Тулашĕнче тулă хумханать,
Шалашĕнче сад пахчи.
Тури Вула кам савать,
Çавна илсе килтĕмĕр,
А-ай, я-я, рай-я-я-а!

Çĕнĕ çынпа кĕрӳ тата кĕрӳн тусĕсем тухса кайнă хыççăн туй халăхĕ çула пуçтарăнать. Вĕсене ăшă сăмахсем каласа ăсатса яраççĕ.

Шилĕк малалла тăсăлать. Çамрăк мăшăра каччăн ашшĕ-амăшĕ çăкăр-тăварпа кĕтсе илет.

Туй арăмĕсем çаплах шӳтлесе юрлаççĕ:

Ах, апай, ах, апай,
Кин туянса килтĕмĕр,
Юрататăн пулсассăн
Мăн çăкăрна йăтса тух,
Юратмастăн пулсассăн
Хушăк витĕр пăхса тăр.

Сад картинчи чечекне
Ма типмелле тунă-ши?
Вун çич çулти ĕмĕрне
Ма иртмелле тунă-ши?
Ма тăсмалла пулман-ши?
Çапла мар-и, тăвансем?

### Туй йывăçĕ

Пирĕн тăрăхра вăрмантан илемлĕ çамрăк çăкана тĕпрен касса килсе кил карти варрине лартаççĕ. Çăка çине таса ал шăлли çакаççĕ. Каччăн та, хĕрĕн килĕнче те çăка йывăçĕ лартаççĕ. Ăна туй йывăçĕ теççĕ. Ун йĕри-тавра карталанса ташлаççĕ, такмаклаççĕ. Çăка йывăç айне эрех, сăра, кучченеç чавса пытараççĕ. Туй халăхне тăванĕсем килтен киле илсе çӳреççĕ. Туй халăхĕ юрласа, ташласа савăнать. Рет çӳресе пĕтерсен тĕп киле пуçтарăнаççĕ. Хăта-тăхлачă çĕнĕ çын тăванĕсене ăсатса яраççĕ. Виçĕ кунран пĕр-пĕрин патне кайса туй йывăççине кăлараççĕ, ун айне пытарса хунă эрех-сăрана тупса кăлараççĕ, пытарнă кучченеçпе хăналаççĕ.

Çăка туй йывăçĕ пулни «анне» ăнлавпа çыхăннă пулас. Çĕнĕ кинĕн ача-пăча çуратса ӳстермелле, амăшĕ пулмалла. Тен, сăлтавĕ урăххинче? Тымарĕ аваллăха каять. Виçĕ кунран çĕнĕ кин килне пынине «тавăрнай» теççĕ.

Туйпа çыхăннă ырă тепĕр йăла пур. Мĕнле те пулин сăлтава пула туя каяйман тăванĕсем пулсан вĕсене ятарласа уйрăм чĕнеççĕ. Хăналаççĕ, хăта-тăхлачпа паллаштараççĕ. Кунта, паллах, ытларах ватăсем. Вĕсем туй вăхăтĕнче мăнукĕсене пăхма киле юлнă. Çапла вара никама та кӳрентермеççĕ. Ватăсем çамрăк мăшăра килĕштерсе пурăнма вăрăм кун-çул пиллеççĕ.

**Борис БОРИСОВ.**
Элĕк районĕ.

**ĔÇ ЮРРИ**

***Гаврил ЛУÇ***

### Ĕмĕр манăçми чăнлăх

I

Ыраш пусси. Сăнанăçем вырма ĕçне
Ачалăхăм аса килет уçăмланса.
Хăрушă вăрçă, выçлăх пирĕн чĕрене
Ĕмĕрлĕхе вырнаçнă пуль. Ирех тăрса

Аппасемпе каяттăмăр колхоз хирне.
Кĕлте çыххи туса, майлаштарса хурса,
Алла тытса акăлчансен çурлисене
Вырма пуçлатпăр тăрăшса, хавхаланса.

Çӳлтен сăнать пире чăн тӳпери вучах:
Çиçет вăл йăлкăшса, хирти ĕçченсене
Сӳнми телей сунса çунать кашни кунах,
Сисет пуль çав çынсем хăйне тав тунине.

Хĕвел кăнтăрлара... çĕмел çумне ларса
Çиетпĕр çĕр улми уйранпала сыпса.

II

– Гаврил, Наçтуçпала лăш çывăрса кайсан,
Ĕç пуçлама вăхăт çитсен пире вăрат.
Ытла та тутлă-çке вăл ыйхă ывăнсан, –
Таиç аппа çĕмел çумне пырса выртать.
Хирте çывăраймастăп кăнтăрла выртсан:
Хăр тăлăха юлни хурлантарать чуна.
Аннемĕр вилчĕ эпĕ улттă тултарсан,
Репресси аттене ăсатрĕ тайгана.

Хĕветĕр звеньевой манмасть-ха тивĕçне,
Янравлăн кăшкăрать хăй тунă сăрнайпа:
«Апат сехечĕ иртрĕ – тытăнар ĕçе!»
Пурте вырма пуçлатпăр çĕнĕ вăй-халпа.

Çĕр ĕçлекен тыр-пул акса пухса кĕртет,
Тыр вырнă чух çĕр улмипе уйран çиет.

III

Çавallă вилĕм пирĕн пӳрт алăкĕнчен
Кĕресшĕнччĕ – çемье хастарлăхне пула
Çук, парăнмарăмăр хăрушă вилĕме.
Çуралнисен – ватăличчен пурăнмалла.

Юлсан та тăлăха усмарăмăр пуça,
Кĕтӳç пушши те уртрăм хул пуççи çине,
Уйра-хирте чухне эп пултăм хам хуça,
Ялан итлерĕм чун-чĕре мĕн хушнине.

Пуçра ыр шухăшсем нумай пуçтарăнсан,
Калем тытса ларатăп хайлавсем çырма.
Сăввăмсене вулакансем юратнăран,
Хам ĕçĕме пултараймастăп хурлама.

Ĕç – пурнăç тыткăчи, çакна асра тытар,
Ĕçĕмĕре пахаласа мăнаçланар.

### Улăхра

Хавасланса утă çулма тухатпăр,
Пире кĕтеççĕ симĕс çарансем.
Паян кунта вăй вылятса çулатпăр,
Ыран – хыватпăр пысăк капансем.

Сар чечекпе тумланнă аслă улăх
Çилпе илемлĕн, лăпкăн хумханать.
Çава сасси, хаваслă юрă-кулă
Тĕтреллĕ улăх тăрăх ян! каять.

Тумлам-тумлам шăрçаланса лараççĕ
Çаран çинчи çут сывлăм пĕрчисем.
Эх, çавасем епле аван касаççĕ,
Хыçа выртса юлаççĕ паккуссем.

– Савни, савниçĕм, ăмăртса çулар-и? –
Тинкерчĕ каччă сар хĕре куçран.
– Ялан эп хатĕр, – хĕр хуллен каларĕ, –
Анчах ан юл эс, чунăмçăм, манран.

Хĕвелĕ хыттăн пĕçертме пуçларĕ,
Типет çут сывлăм. Утăри çынсем
Канмашкăн ларчĕç. Юрă янăрарĕ,
Юрра тăнларĕç вăрмансем, хирсем.

### Кĕрхи ӳкерчĕксем

Укăлчаран тухатăп та ман çулăм
Выртать хир урлă, улăх варрипе.
Çĕрле шултра шăрçа пек ӳкнĕ сывлăм
Сăрларĕ ман атта чĕр кĕмĕлпе.

Тыр-пул вырнаçрĕ кĕлете. Сар хăмăл
Çирĕплетет çав чăнлăха паян.
Çакна кура яр уçă манăн кăмăл,
Сĕтелĕмĕр çĕн çăкăрпа пуян.

Мăн улăхра капан пит йышлă ларнă –
Ăратлă выльăх тутă хĕл каçать.
Кĕр çитеспе каю аван хăпарнă –
Сип-симĕс пурçăн сарнăн курăнать.

Кĕретĕп вăрмана. Сипетлĕ сывлăш
Усăлтарать кăкăрăма. Умран
Иртет ав шухă çил ачи вăш та вăш,
Перет сар çулçăпа питрен-куçран.

Паланĕ çулçă палăрми хĕп-хĕрлĕ,
Сĕткенĕ куçнăн туйăнать ăша.
Палан çисен чăвашăн чирĕ-чĕрĕ
Пач çухалать. Пăчлантăр апăрша!



# Пĕччен кашкăр

## Роксолана

“Великолепный век” сериал юлашки вăхăтра пин-пин çынна сенкер экран умне пуçтарать. Турци султанĕ Сулейман Украина чиперккишĕн Роксоланăшăн пуç çухатни мĕнпе вĕçленесси кăсăклантарать çынсене. Сериала истори пулăмĕсене тĕпе хурса ӳкерни паллă. Çав тапхăрта вара Турцире султанат пулнă. Гарем хуçи саккунлă майпа тăвата арăм тытса тăма пултарнă. Наложницăсен вара шучĕ те пулман. Йĕркепе килĕшӳллĕн, престол пĕрремĕш арăмран çуралнă ачасене кăна куçма пултарнă. Шăпах çак йĕрке арăмсен хушшинче вăрçă çуратнă та.

“Роксолана” роман авторĕ П.Загребельный пĕчĕклех тыткăна илсе Стамбула çитернĕ хĕр ача пирки çырса кăтартать. Унта вăл осман империйĕн ертӳçин гаремне çакланать. Чеелĕхпе, ултавпа усă курса Роксолана султанăн юратнă арăмĕ пулса тăрать. Ислам тĕнне йышăннă хыççăн ăна “Хюрем” тесе чĕнме пуçлаççĕ.

Историренех çакă та паллă. Роксолана ăслă та хаваслă кăмăллă пике кăна мар, пултаруллă еркĕн те пулнă. Гаремри ытти чиперккене хыçа хăварма шăпах çакă пулăшнă та ăна.

“Великолепный век” сериалра Хюрем сăнарне Марьям Узерли калăплать, Сулейман султана Халит Эргенч вылять.

## Амăшĕ

Марьям Узерли 1983 çулхи çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнче Германире çуралнă. Амăшĕ – нимĕç хĕрарăмĕ, ашшĕ – туркă. Зодиак тăрăх Марьям – Арăслан. Хĕр пысăк та туслă çемьере ӳснĕ. Унăн икĕ пиччĕшĕ тата йăмăкĕ пур. Пĕчĕк чухне Марьямран актриса пуласса никам та кĕтмен пулĕ – вăл питĕ çынран ютшăннă. Çапах та ӳссе çитсен вăл актриса профессине суйланă. Германирех вĕреннĕ, театра ĕçлеме вырнаçнă.

Чи малтанах вăл вăрçă тематикипе ӳкернĕ фильмри сăнара калăпланă. Каярахпа тепĕр фильмра роль сĕнекен тупăннă. Фильмра ӳкерĕнме актрисăна питех те килĕшнĕ. Анчах та иккĕмĕш роль хыççăн çур çул иртнĕ, текех ĕç сĕнекен тупăнман. Актрисăн депресси пуçланнă. Шăп çак самантра шыраса тупнă тă ăна “Великолепный век” сериал продюсерĕсем.

Роксолана рольне калăплама сĕнсен малтанах Марьям çухалсах кайнă – вăл турккăлла пачах та калаçма пĕлмен вĕт. Пушшех те, Хюрем осман патшалăхĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннă: апла тăк ăна сăнарласси те – питĕ яваплă ĕç. Марьям яланах Германире пурăннă, Турцире вăл темиçе хутчен кăна пулса курнă. Çапах та актриса йывăрлăхсенчен хăраса ӳкмен – контракта алă пуснă. Паллах, Марьяма питĕ йывăр пулнă – Турцире вăл никама та пĕлмен, ку чĕлхепе вăл икĕ-виçĕ сăмах кăна калама пултарнă. Малтанах вăл куçаруçă пулăшăвĕпе усă курнă. Режиссер мĕн хушнине ăна нимĕçле куçарса панă. Çавăнпах пĕр дублĕн миллион вариантне те тума тивнĕ-тĕр...

Фильмри сăнарпа танлаштарсан Марьям пурнăçра – ырă чунлă хĕрарăм. Вăл лейкемипе чирлĕ ачасене пулăшас тĕллевпе волонтерсен юхăмне те хутшăннă. Экран çинчи сăнара калăпланă май актриса Хюрем чун-чĕрине те ăнланса çитнĕ темелле. Хăй каланă тăрăх, кун пек хĕрарăмăн çулĕ урлă каçмĕччĕ вăл.



Фанатсен шухăшĕ те тĕрлĕрен. Пĕрисем Хюрем ролĕ валли Марьям шăпах юрăхлине палăртаççĕ. Теприсемшĕн актриса çителĕклĕ хитре мар – пурнăçра Роксолана тата илемлĕрех пулнине калаççĕ. Çапах та Марьям ыттисенчен уйрăларах тăрать, çакăншăн унăн юнĕнче харăсах икĕ халăхăнни чупни “айăплă”. Марьямăн кăнтарса тăракан янахĕ ку хĕр нимĕнле йывăрлăх умĕнче те пуçа усмассине калать. Çутă симĕс куçĕ шалти вăрттăнлăха палăртать. Сериал продюсерĕсен çакăн пек актриса тупăннăшăн савăнмалли кăна юлать.

Роксоланăн фаначĕсем Марьяма тулли кĕлеткеллĕ тесе те тиркеме пăхаççĕ. Сериалра ӳкерĕннĕ вăхăтра актриса туртма пăрахнă, çавна май 9 килограмм хушнă. Интервьюра вăл 3 килограмне çухатма ĕлкĕрнине калать, апла тăк тата кăштах начарланмалли юлнă.

“Великолепный век” сериала пула чапа тухнă актриса пурнăçĕ, паллах, унăн фаначĕсене кăсăклантарать. Пĕр вăхăт ӳкерĕннĕ хыççăн актриса таçта çухални те тĕрлĕ сас-хура çуратрĕ. Пĕрисен шухăшĕпе, Марьяма гонорар тивĕçтерме пăрахнă. Теприсем вара вăл йывăрлăхсене чăтайманнине çирĕплетеççĕ. Марьям кун евĕр шăв-шава хирĕçлет. Чăнлăх нумаях пулмасть çиеле тухнă – актриса... хĕр çуратнă! Марьям хăй сериалра ача кĕтнине пула ӳкерĕнме пăрахнине калани çирĕпленнĕ апла тăк.

## Ашшĕ

Çурла уйăхĕнче Марьям “Hurriyet” хаçата панă интервью лару-тăрăва татах та уçăмлатать. Актриса унта хăйĕн ачин ашшĕ пирки каласа кăтартать. Джан Атеш – биржа ĕçченĕ. Юбкăсене хăй çумĕнчен сайра ирттерсе яракан ловелас актрисăна диетăна пăхăнма хистесех ыйтнă. Арçын шухăшĕпе, Марьям ытла та самăр, çавна пула сексуаллă илĕртӳлĕхĕ çук унăн... Атеш палăртнă тăрăх, хĕр тăхăнма та пĕлмест, çавăнпа та стиль тĕлĕшĕнчен каччипе килĕшсе тăмасть. Çакăн пек хутшăнусене пула хĕр хăйне питех те телейсĕр туйнине пытарман. Актриса Атеша пур енчен уçса пама тăрăшни куç кĕрет. Çавна май арçыннăн килпетсĕр хăтланăвĕсене те пытарман вăл. Калăпăр, мăшăр Бодрум хулине кайсан Джан хĕре ют хулара пĕччен, кĕсьере пĕр пуссăр пăрахса хăварнă. Çапах та Марьям Стамбула таврăнма пултарнă. Анчах та çакă хĕр чĕрине çав тери амантнă, чун асапне чăтаймасăр вăл хăй çине алă хума тăнă. Юлашки самантра Марьям хăйне алла илнĕ, çапах та асаплă çак хутшăнусене малалла тăсас темен. Пушшех тепĕр май, вĕсенчен хăпас тĕллевпе Берлина тухса тарнă. Кĕçех Джан шăнкăравланă, пике мĕншĕн Германие таврăннипе кăсăкланнă. Турци МИХĕсем çак шăнкăрав историне хăйсене май çавăрса кăтартнă. Пĕчĕк гонорар пирки сас-хура çапла çуралнă. Укçа сахалли çитмен, актриса йывăрлăхсенчен те хăранă-мĕн. Ĕç условийĕсене чăтайманнипе софитсем айĕнчех тăн çухатса йăванайăвана кайнă имĕш. Актриса вара çакă пĕтĕмпех суя пулнине калать. Чăн та, хăйĕн çие юлнине Марьям малтанах хăй те пĕлмен-ха. “Джан Германие пурĕ виçĕ хутчен килсе кайрĕ, – каласа кăтартнă каярахпа актриса. – Юлашкинчен – çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче”. Арçын ун чухне те Марьям сывлăхĕпе кăсăкланнă. Хĕрĕн кăкăрĕ пысăкланни сисчĕвлентернипе вăл Марьяма тестпа усă курса тĕрĕсленсе пăхма сĕннĕ. Арçын ахалех иккĕленменни палăрнă – аптекăра тест туянса тĕрĕсленĕ хыççăн Марьям хăй ача кĕтнине пĕлнĕ. Çак хыпар арçын чунне ăшăтса ирĕлтерессе кĕтетĕр тĕк – йăнăшатăр. Арçын Марьяма хырăм пăрахма сĕннĕ, ачана хăй пур пĕр йышăнмассине каланă. Ку çитмен, вăл ача ашшĕ хăй пулни пирки те иккĕленме пуçланă – вĕсем савăшу вăхăтĕнче сыхланнă вĕт... “Ар çыхăнăвне самантлăха татни çие юлассинчен сыхланма пулăшманнине миçе хутчен каланă ĕнтĕ эпĕ ăна”, – хуравлать Марьям.

## Пепкешĕн...

Хырăм пăрахма кайиччен мăшăр психологпа канашлама шухăшланă. Кунта вара татах та вăйлărах çапăçса кайнă. Джан Марьяма ятарласах çие хăварнă тесе айăпланă – арçынна çапла майпа хăй çумне çыхса лартасшăн имĕш. Тарăхсах çитнĕ хĕрарăм хăй ачана хăварас шухăшлине каланă. Пушшех те – çие юлнин срокĕ пĕчĕк мар ĕнтĕ. Унсăр пуçне, Марьям 30 урлă каçнă. Кам пĕлет – тен, урăх унăн ача та пулмĕ? Джан çакăн хыççăн Турцие таврăннă. Хăй ачана йышăнмассине татăклăн палăртнă. Аса илтерме те манман – Турци йĕркипе килĕшӳллĕн, арçын ачана хирĕç тĕк хĕрарăмăн ăна çуратма ирĕк çук...

Психолог патĕнче калаçăва вĕçленĕ май унăн “Эсир çак ачана çуратса унăн ашшĕне яланлăхах хăвăр çума çыхса лартас шухăшлă-и” ыйтăвне Марьям çапла хуравланă: “Малашлăха эпĕ çак пепкепе çыхăнтарăп”.



## ЮЛАШКИНЧЕН

**Хюрем ролĕн кастингĕ питĕ хĕрӳ иртнĕ – Америка, Аслă Британи, Хорвати, Болгари, Турци актрисисем темиçе уйăх тупăшнă çак сăнара калăплассишĕн.**

**Каярахпа Марьям Узерли çапла аса илсе каласа кăтартнă.**

**● Атте мана Турци çинчен темĕн каласа кăтартма хăтланатчĕ-ха, эпĕ çавçавах çак çĕр-шыв çинчен Ататюркстăр пуçне урăх нимĕн те пĕлместĕм. Турккăлла ăнланман пирки хама мĕн кĕтнине пĕлмен-ха эпĕ. Ахаль кино кăна пулĕ тесе шухăшланăччĕ... Стамбул çине чӳречерен пăхса тăнă май пĕчченлĕх туйăмĕ çавăрса илчĕ мана. Вара эпĕ Хюремпа калаçма пуçларăм. “Санăн чуну таçта çакăнтах. Илтетĕн-и эсĕ мана – пĕлместĕп. Эсĕ тахçан çакăнта пурăннă. Эпĕ вара халĕ кăна килтĕм. Эсĕ те тахçан асапланнă. Япăххине те тунă-тăр, лайăххине те – çапах та эсĕ те çынах-çке. Мана шанатăн тăк, эпĕ санăн сăнарна калăплама тивĕçлĕ тесе шухăшлатăн тăк – вăй пар мана. Вара эпĕ хамран мĕн килнине йăлт тăвăп. Пĕлместĕп – мĕншĕн, анчах та эпĕ саншăн йăлт пăрахса кунта куçса килме хатĕр”.**

**● Хюрем – хăть те хăш самантра çурăлса кайма пултаракан бомба. Эпĕ вара бомбăсене юратмастăп. Эпĕ – çураçупа килĕшӳлĕхшĕн. Маншăн хама пĕлни пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ – пĕччен кашкăр. Ĕçрен киле таврăнсан манăн пĕр вăхăт пĕччен пулмалла. Çакăн хыççăн кăна юлташсемпе хутшăнса пурнăçпа киленме пултаратăп.**

**● Хюрем саманинче пурăнас килмест манăн. Юратăва влаçшăн кĕрешнипе танлаштармăттăм. Юрату пурăнма вăй хушмалла. Маншăн юрату – ирĕклĕх. Хюрем вара урăх пурнăç курман. Мĕн тăвăн?**

**● Манăн асатте Германире ĕçлесе пурăннă. Атте унтах çуралнă. Аннепе иккĕшĕ университет коридорĕнче тĕл пулнă. Пĕр-пĕрне килĕштернĕ. Атте тем пек тăрăшнă, килте эпир туркă апат-çимĕçне хатĕрленĕ пулин те эпĕ нимĕç пулса ӳснĕ.**

## И-ХИ-ХИК

– Паян пирĕн – тĕрĕслев ĕçĕ, – тет вĕрентекен ачасене.
– Калькуляторпа усă курма юрать-и?
– Юрать.
– Транспортирпа вара?..
– Тархасшăн. Тĕрĕслев ĕçĕн теми: "Раççей историйĕ. XVII ĕмĕр".

* * *

– Сирĕн хĕр питĕ тимсĕр, – çамрăк амăшне каласа кăтартать вĕрентекен. – Иртнĕ эрнере вăл киле парса янисене мар, пачах урăх задачăсене шутласа килнĕ. Ĕнер вара вăл ют парта хушшине кĕрсе ларнă.
– Ăнланмастăп: кама хывнă вăл? – пăшăрханать хĕрарăм.
– Сăмах май, сире эпĕ шкула ыран килме ыйтнăччĕ, паян мар...

* * *

Истори урокĕнче.
– Иванов, Измаила кам илнĕ?
Иванов /хăраса ÿксе/:
– Эпĕ илмен! Тен, Сидоров?
Тĕлĕннĕ вĕрентекен çак калаçу пирки завуча пĕлтерет.
– Ан пăшăрханăр, – лăплантарать завуч. – Ачасем вĕт вĕсем. Вылякалаççĕ те тавăрса параççĕ.
Истори вĕрентекенĕ аптранипе директор патне пырать, завуч мĕн каланине пĕлтерет.
Директор /ĕçлĕн/:
– Хăш класс?
– 5 "А".
– А-а-а, çук, вĕсем тавăрса памаççĕ...

* * *

Юнашар класри шăв-шав урок ирттерме чăрмантарнипе учитель унта каять те чи хытă кăшкăракан арçын ачана хăлхинчен ярса илсе хăйĕн класне кайса лартать. Шăв-шав лăпланать. Кĕçех алăкран шăппăн шаккани илтĕнет, кÿршĕ класри арçын ача кĕрсе тăрать:
– Каçарăр та, эсир пирĕн вĕрентекене каялла тавăрса параймăр-ши?

* * *

Роман Абрамовичăн ывăлĕн "Эпĕ çуллахи каникула мĕнле ирттерни" сочиненине вуласа учитель кĕвĕçнипе вилсех кайнă.

* * *

– Иванов, эсĕ виçĕм кун мĕншĕн шкула килмен? – ыйтать вĕрентекен.
– Анне манăн шăлавара çунăччĕ те...
– Юрĕ тейĕпĕр... Ĕнер вара?
– Ĕнер сирĕн çурт çумĕпе иртсе пыраттăм та шăлаварăра балкон çине типме çакнине асăрхарăм. Эсир те шкула килместĕр пулĕ терĕм...

* * *

Аса илÿрен.
– Анне мана пĕрремĕш класа çавăтса килни тата атте сыв пуллашу каçĕнчен çĕклесе кайни халĕ те куç умĕнчех...

* * *

Монтажник строительсен бригади ĕç шырать. Савăшу сĕнмелле мар...

* * *

Тинĕс хĕрринче хĕртĕннĕ май сăнаса выртатăп-ха – хĕлĕпех тренажер залĕсенче тата фитнес-клубсенче ытлашши килограмсемпе кĕрешнисем темшĕн килмен кунта? Ăçта канаççĕ-ши вĕсем?

* * *

Чи лайăх юлташ – кушак. Вăл эсĕ çĕрле сивĕтмĕшре чаканнăшăн нихăçан та вăрçмасть, хăй те санпа пĕрле апатланма яланах хатĕр.

* * *

Хĕр ĕмĕр тăршшĕпех принц килессе кĕтнĕ. Ун вырăнне почтальон çитнĕ, пенси парса хăварнă...

* * *

Тепĕр чух кун пĕр усăсăр иртет. Кун пек чухне каçхине киле таврăнатăн та: "Мĕн тесе сăрланса косметикăна сая ятăм паян", – тесе шухăшлатăн.

* * *

– Арăмупа киноçăлтăр хушшинче суйлама тивсен çăлтăрсенчен хăшне суйласа илĕттĕн?

* * *

– Мĕн тăватăр эсир кунта?
– Самолет кĕтетĕп.
– Шкапра мĕнле самолет пултăр?
– Эсир командировкăна ларса вĕçни.

* * *

Ĕçрен киле таврăннă арçынна арăмĕ плакатпа кĕтсе илет: "Эпĕ санпа калаçмастăп!" Упăшки хулпуççине сиктеркелесе илет те телевизор умне вырнаçать. Хĕрарăм тепĕр пилĕк минутран ун патне çĕнĕ плакатпа пырса тăрать: "Сăлтавне калас-и?"

* * *

– Алло! Лавкка-и ку?
– Çапла, итлетпĕр сире.
– Эпĕ ĕнер сирĕн патра питĕ хăватлă пылесос туянтăм...
– Хыттăнрах калăр-ха – илтместпĕр сире!
– Пĕлетĕр-и: эпĕ сирĕн пата тусан хутаçĕнчен шăнкăравлатăп!

* * *

– Чунăм! Çуралнă кунпа пĕр-пĕр вак-тĕвек парнелесем мана! "О! Лексус!" – тесе савăнам...

* * *

– Бердянскран пуйăс кĕтекенсене пĕлсе тăма – вăл кăшт каярах юлса çитет. Халĕ шăпах Тулăран пуйăс килет – ăна кĕтсе илме пултаратăр – унта та çынсемех, вĕсене те кăмăллă пулĕ!


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŸСЕМ

**САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"**
**УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!**
**Санаторий "Надежда" желает Вам здоровья, долголетия и приглашает на ОСЕННИЕ СКИДКИ.**
**Только с 1 сентября по 31 октября 2014 г. стоимость санаторно-курортной путевки – 10 дней:**
**"Стандарт" – 18000 руб., "Пенсионер" – 16500 руб.**
**К ВАШИМ УСЛУГАМ:** ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.
**Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.**
**Спешите, количество мест ограничено!**
Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**
**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.
**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.
**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.
**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.
**15.Кирпич, к/блок.** Т. 89613393363.
**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.
**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.
**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, **metalservis21.ru**
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.
**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.
**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.
**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.
**28.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**
**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**
**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 489277, 89033899038.
**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**
**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.
**55.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.
**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.
**62.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.
**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

### ПРОДАЮ

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.
**134.Кирпич** любой, **кольца, блоки.** Д-ка манипул-ом. Т. 89033587353.
**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.
**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.
**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.
**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.
**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.
**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.
**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – **недорого. Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.
**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.
**587.ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната. **Скидки.** Т.8-927-667-62-02
**609.КОМНАТУ.** Т. 8-937-953-40-70.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.
**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.
**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.
**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.
**575.ЭКСТРАСЕНС.** Т. 89876603929.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.
**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### СУТАТĂП

**580.ÇУРТ** /газ, шыв пур/. **Элĕк р-нĕ, Вылпасар.** Т. 8-927-857-23-54.



«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7870. Заказ 3355.